25-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

1942 МАРТ 29 ВЫРСАРНИКУН 74(6099) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ.

Шкулсем çуракине хатěрленес ěçре

Отечественнăй вăрçă условийěсенче пирěн шкулсен сăн_сăпачě, вěсен ěçěн содержанийě чылай улшăнчě. Уйрăмах шкулсен обществăлла-политикăлла пурнăçри ролě калама çук ÿсрě. Учительсем, аслăрах классенче вěренекенсем ялсенче активлă агитаторсем пулса ěçлеççě, çакăнпа пěрлех вěсем вырăнти парторганизацисен, ěççыни депутачěсен вырăнти совечěсен шанчăклă помощникěсем те пулса тăраççě. Шкул коллективěсем ялсенче, рабочи поселокěсенче, хуласенче партипе правительство иртерекен мероприятисене пурнăçа кěртес ěçре çине тăрса пулăшаççě.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа шкулсем Хěрлě Çар боецěсем валли ăшă япаласем пухас ěçре, оборона фондне укçа пухса парас ěçре, çавăн пекех фронта пулăшас ытти мероприятисене те активлăн хутшăнса ěçлерěç.

Учительсемпе шкул ачисен патриотизмě иртнě çулта колхозсене тырпул пуçтарса кěртме пулăшнă çěрте уçăмлăн палăрчě. Иртнě çура тата кěркунне çěршер учительсем, пиншер шкул ачисем колхоз хирěсенче ěçлерěç, ăнса пулнă тырра пуçтарса кěртме колхозсене нумай пулăшрěç. Первомайски районěнчи Шаймурзинăри туллимар вăтам шкул хăй вăйěпе 88 гектар çинчен тěрлě тыр-сене пуçтарса кěртнě. Çав районрах Вăрманкасри Шăхаленчи пуçламăш шкулта вěренекен ачасем кěркунне колхозра 900 ěçкунě ěçлесе илнě. Советскинчи вăтам шкулта вěренекенсем çуллахи вăхăтра колхозсене 40 гектар тырра пуçтарса кěртме пулăшнă. Учительсемпе вěренекенсем хушшинче иртнě çулта 100—150 ěçкунě тунисем сахал мар. Сăмахран, Шěмшерти (Шупашкар р.) вăтам шкулта вěренекенсенчен: Сергеев 100 ěçкунě, Константинов — 140 ěçкунě, Иккассинчи вăтам шкулта (Шупашкар р.) вěренекен Макаров 150 ěçкунě тунă.

Иртнě çулта колхозсенче ěçлесе илнě опыта малалла сарса, халěхи вăхăтра пирěн республикăри чылай шкулсем колхозсене çуракине хатěрленес тěлěшпе те пысăк пулăшу параççě. Елчěк районěнчи шкулсенче вěренекенсем февраль уйăхěнче колхозсене 228 центнер вăрлăх сортласа панă, 300 центнер ытла кěл, 160 центнер кайăк-кěшěк тислěкě пуçтарнă, хире 1294 лав тислěк тăкнă, машинăсене юсама 1080 штука тěрлě машина пайěсене пухса панă. Шăмăршă районěнчи шкулсенче вěренекенсем 106 центнер кěл пуçтарнă, вăрлăхсене сортлас ěçре колхозсене пысăк пулăшу параççě. Комсомольски районри Чурачăкри вăтам шкулта вěренекенсем 125 центнер вăрлăх сортласа панă, 65 центнер кěл пуçтарнă.

Шăмăршă районěнчи учительсем 15 колхозра агротехника кружокěсене ертсе пыраççě.

1942 çулта ялхуçалăх ěçěсенче активлăнрах хутшăнса ěçлес, çураки пуçланиччен агротехникăн никěсěсене алла илсе машинăсемпе ěçлеме вěренес тěлěшпе халěхи вăхăтра туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче вěренекенсем ялхуçалăх ěçне вěренсе пыраççě. Республикăра вěренекенсем хушшинчен 18 пин çын ытти агротехника никěсěсене тата ялхуçалăх машинисемпе ěçлеме вěренеççě, 1.700 çын ытла тракторпа, комбайнпа ěçлеме, автомобильпе çÿреме вěренеççě. Вěренекенсенчен чылайěшě ялхуçалăх ěçне пěтěм тимлěхе хурса вěренеççě, урoксене конспектласа пыраççě, кирлě учебниксене туянаççě, урoксене сиктермесěр çÿреççě. Шěмшерти вăтам шкулта 68 ача тата 10 учитель трактор ěçне вěренеççě, вěренме тытăннăранпа вěсем пěр урок та сиктермен. Красноармейски районри ялхуçалăх ěçне вěренекен шкул ачисен 62 проценчě февраль уйăхěнче ялхуçалăхěпе «отлично» е «хорошо» паллăсем илнě, начар отметкăсем илекенни пулман.

Анчах шкулсем енчен çуракине хатěрленес ěçре, шкулсен вăйěпе çуракине хатěрленме колхозсене пулăшас ěçре çитменлěхсем те сахал мар-ха. Сăмахран, апат-çимěçе калкан çěрулмин тăррисене Лысенко академикăн меточě тăрăх касса хатěрлес тěлěшпе шкулсем пачах та çителěксěр ěçлеççě. Хăшпěр шкулсенче ялхуçалăх ěçне вěрентессине кая юлса тытăннă. Елчěк районěнчи Лаш_Таяпари вăтам шкулта, ялхуçалăх ěçне вěрентме уйăрса хунă агроном Осипов ěçе тытăнмасăр тăнипе пула, ялхуçалăх ěçне вěренесси февралěн 2-мěшěнче анчах пуçланнă. Чылай шкулсенче кěл, кайăк_кěшěк тислěкě пухас ěç питех те сÿрěккěн пырать.

Вырăнти Сутěç тата çěрěç пайěсем 1942 çулти ялхуçалăх ěçěсенче шкул ачисен вăйěпе усă курассине планласа хурас тěлěшпе нимěнех те тумаççě_ха. Сутěç Халăх Комиссариачěн приказě тăрăх кăçал ялхуçалăх ěçěсен хěрÿ вăхăчěсенче шкул ачисене VI-мěш класран пуçласа колхозсемпе совхозсене ěçе ямалла, шкул ачисене колхозсенчи бригадăсемпе звеносем çумне çирěплетсе хумалла, кирлě пулсан, шкул ачисен уйрăм бригадăсемпе звеносем организацилемелле, бригадирсемпе звеньевойсене учительсенчен уйăрса хумалла. Вěренекенсене ялхуçалăх ěçěсене хутшăнтарассине çирěп дисциплина, организованность кирлě. Кашни ачана тивěçлě вырăна тăратмалла, конкретнăй ěç хушмалла.

Çав хушăрах вěренекенсен ěçне учета илсе пырас, вěсен ěçне хаклас, вěсене апат-çимěç тăратас, медицина пулăшăвне парас, вěсем хушшинче культурăллă ěçе сарас ыйтусем паллă вырăна тухса тăмалла. Сутěç тата çěрěç органěсем, шкулсем, колхозсен руководителěсем ку ыйтусем тăрăх çывăх вăхăтра татăклăн калаçса татăлма тивěçлě.

Çураки вăхăчě çывхарса пынă май шкулсен обществăлла ěçне, шкулсем енчен колхозсене çуракине хатěрлеме пулăшассине анлăнрах сарса ямалла. Халěхи вăхăтра колхозсенче агрокружоксем ěçлеççě. Колхозсенче агрокружоксен ěçне йěркелеме пулăшасси, кружоксене калаçусем, докладсем туса иртерессси — учителěн хисеплě ěçě шутланать.

Çураки пуçлансан, çитěннě колхозниксемпе колхозницăсем пурте пекех хир ěçне тухěç. Вěсен пěчěк ачисем валли колхозсенче яслисем, ача площадкисем уçмалла. Яслисемпе ача площадкисенче ěçлеме кирлě кадрсене халех хатěрлес пулать. Ку кадрсене хатěрлес ěçре те шкулсем пысăк пулăшу пама тивěçлě. Яслисемпе ача площадкисенче ěçлеме аслăрах классенче вěренекен хěрачасене хатěрлес пулать. Вěсем валли кěске вăхăтлăх семинарсем туса иртермелле, вěсене шкул çулне çитмен ачасемпе ěçлемелли методикăпа паллаштармалла.

Колхозницăсене ěç вăхăтěнче пěчěк ачасене пăхассинчен хăтарас тěлěшпе пионерсемпе шкул ачисен тимурла движенине анлăн сарса пымалла. Кăçěн классенче вěренекен пионерсемпе шкул ачисем Хěрлě Çара кайнисен тата пěчěк ачаллă колхозницăсен çемьисене шефа илсе, ěç вăхăтěнче пěчěк ачасене пăхма, пÿрт-çурта астăвма, пÿрт-çуртра пуçтарса тăрса пысăк пулăшу пама пултараççě.

Çуракине тěплěн хатěрлесе пысăк пахалăхпа иртерессси пěтěм Совет çěршывěшěн черетре тăракан пысăкран та пысăк ěç пулса тăрать. Пирěн совет шкулě, совет учителěсемпе шкул ачисем çак хисеплě ěçе хăйсен пěтěм тимлěхне хума тивěçлě. Тылри учительсен, шкул ачисен патриотизмě çак вăхăтра çуракине хатěрленес ěçре колхозсене анлăн пулăшнинче, ялхуçалăх ěçěсене активлăн хутшăнса ěçленинче палăрмалла.

Май уявě çывхарса килнě майěн республикăри предприятисемпе учрежденисем, колхозсем, колхозниксем, рабочисемпе служащисем социализмлă ăмăртăва тухаççě. Çак ăмăртăва шкулсен те хутшăнмалла. Ăмăртăва хутшăннă шкулсен тěп ěçě — çуракине хатěрленсе унта активлăн ěçлесси пулмалла.

Май уявě умěнхи ăмăрту

Çěнě стахановецсем ÿсеççě

КАНАШ, мартăн 28-мěш. («Чăваш Коммуни» корр., телефонпа). Май уявě ячěпе пуçланнă социализмлă ăмăрту ěç фронтěнче кунсерен çěнě стахановецсене палăртать. Вунă кун каярах вагонсем юсакан заводри литейнăй цехра ěçлекенсем (цех начальникě Губский юлташ) уяв умěнхи ăмăртăва хутшăнса конкретнăй обязательствăсем илнěччě. Халě вěсем хăйсем çине илнě обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççě.

Златников, Подвиженко тата Котляренко формовщиксем кашни сменăрах ěç нормисене 250—300 процентран кая мар тултарма пулнă. Формовщик Златников мартăн 21-мěшěнче ěç нормине 300 процент, мартăн 23-мěшěнче 310 процент тултарнă. Подвиженкăпа Котляренко та 2—2,5 норма тултарчěç.

Вунă кун хушши пынă социализмлă ăмăртура цехри двухсотниксемпе трехсотниксен йышě 60 процента çити ÿсрě.

Депори паллă слесарь Черкасов юлташ ертсе пыракан комплекснăй бригадăсем 16 кун хушшинче 21 паровоза промывочнăй ремонт тума пулнă. Çичě кун хушшинче вěсем 15 паровоза юсарěç. Чеботаревпа Киселев слесарьсем кашни сменăрах 4-шар норма тултарса ěçлерěç. Çавăн пекех Тарасов, Григорьев, Абросимов, Гунчак стахановецсем те лайăх ěç тěслěхěсем кăтартрěç. Паллă тимěрçěсем Федоровпа Карпычев юлташсем кашни сменăрах ěç нормине 2-шер хут тултарса пычěç. Кунсăр пуçне вěсем ěçрен пушанă вăхăтсенче çывăхри колхозсем валли 107 плуг юсарěç.

Мартăн 27-мěшěнче электросварщик-комсомолец Сергей Жигунов çěнě рекорд турě. Вăл 105 сехетре тумалли ěçе 8 сехет хушшинче пурнăçларě. Çапла вара сменăра 9 норма ытла тултарчě. Депора кун пек пысăк рекорд вăрçă пуçланнăранпа урăх пулман-ха.

П. НИКОЛАЕВ.

Совет Информаци Бюровěнчен

Мартăн 27-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Мартăн 27-мěшěнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Мартăн 26-мěшěнче противникăн 15 самолетне пěтерсе тăкнă. Пирěн 9 самолет пěтнě.

Мартăн 27-мěшěнче Мускав патěнче нимěçсен 2 самолетне персе ÿкернě.

* * *

Мартăн 26-мěшěнче пирěн авиачаçсем нимěçсен 6 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинине, боеприпассем тиенě 50 ытла лавне, горючи тултарнă 4 автоцистернине тата чугунçул çинчи 4 цистернине, полевой артиллерипе зенитнăй артиллерин 28 орудине, 13 минометне, зенитнăй пулеметсен 13 точкине пěтерсе тăкнă е сиенленě, чугунçул çинчи танксемпе артиллери тиенě эшелона çěмěрсе тăкнă.

* * *

Юлашки 5 кун хушшинче Калинин фрончěн участокěсенчен пěринче противника хирěç вăйлăн çапăçнă. Гитлерăн командованийě, хăйěн резервěсене илсе пырса, нимěçсен оборони ăшне сăвăлланса кěрсе кайнă пирěн войскăсене пырса çапма хăтланнă. Çав шутпа Гитлерăн командованийě пирěн чаçсене хирěç çапăçăва хăйсен эсэсовецěсенчен тăракан «Райх» дивизине, 14-мěш моторизованнăй дивизин 11-мěш мотополкне, 20-мěш дивизин 312-мěш полкне тата 50 танк кěртсе янă. Хаяр çапăçусем хыççăн нимěçсен 2.450 салтакěпе офицерне вěлернě тата питě нумай амантнă. Тыткăна илнисем каласа панă тăрăх, «Райх» дивизине кěрекен эсэсовецсен «Дойчланд» ятлă полкě хăйěн 1400 салтакěпе офицерěнчен 900 çын çухатнă. Çапăçусенче нимěçсен 25 танкне, пулеметěсемпе автоматěсене тата ытти тěрлě хěçпăшалěсемпе çар пурлăхěсене нумай пěтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фрончěн участокěсенчен пěринче нимěçсен 24 танкě пирěн пехотнăй чаçсене атакăлама хăтланнă. Тăшманăн машинисене хирěç çапăçăва советăн 7 танкě тухнă. Пирěн танкистсем нимěçсен 7 вăтам танкне, пěр çăмăл танкне пěтерсе тăкнă тата 4 огневой точкине пусарса лартнă. Противникăн 100 çын ытла вилнě.

* * *

Бобров юлташ командир пулса ертсе пыракан пирěн часть (Хěвеланăç фрончě) противника хирěç пěр кун хушши çапăçса, нимěçсен 7 огневой точкине тата салтакěсемпе офицерěсене 120 çынна ытла пěтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Ступишин, разведкăна ăнăçлăн ирттернě хыççăн противникăн тылěнчен таврăннă чухне, нимěçсем йышлăнса илнě ял хěррине пырса тухнă. Ял çыннисем пăрахса тухса кайнă çуртсенчен пěринче нимěç офицерěсен улпăчě вырнаçнине пěлсен, Ступишин юлташ çав çурт патне вăрттăн пынă та ăна вут тивертсе янă. Нимěçсем, панкăна ÿксе, çунакан çурт ăшěнчен тухса тарма тытăнсан, Ступишин юлташ вěсем çине гранатăсем ывăтнă. Нимěç офицерěсем 25 çынна çити пěтнě.

* * *

Ленинград партизанěсем Б. тата Т. юлташсем командир пулса ертсе пыракан икě отрячě нимěçсене пěр ялтан хěссе кăларнă. Противникăн салтакěсемпе офицерěсем 72 çын вилнě. Гитлеровецсем хăйсен чаçěсем валли продовольстви турттарса пыракан çул çине партизансем минăсем хурса тухнă. Çав минăсем çинче нимěçсен апат-çимěç тиенě 5 çуни тата 7 салтакě сирпěнсе кайнă. И. юлташ ертсе пыракан отрядри партизансем, пулеметсемпе пăшалсенчен персе, пěр кун хушшинче нимěçсен аялтан вěçсе пынă «Ю—52» йышши икě самолетне персе ÿкернě.

* * *

Румынин 18-мěш пехотнăй дивизийěнчи 18-мěш полкăн 2-мěш ротинчен тыткăна лекнě ефрейтор Василе Жияну çапла каласа панă: «Эпир тăтăшах выçă лартăмăр. 2-мěш ротăри салтак Константин Унгуряну лав çинчен пěр çăкăр вăрланă. Çакăншăн капитан Думитреску ăна персе вěлеретěп тенě. Унгуряну çěрле хăйне хăй вěлерме тăнă, анчах та чěрех юлнă. Хăйне хăй вěлерме тăнă чухне Унгуряну аманнă пулнă, çакăн хыççăн ăна госпитале ăсатнă. Кайран ăна военно-полевой суд аллине панă. 2 эрне каярах капитан Думитреску пире строя тăратса çапла каларě: салтаксем, сирěн 50-шар грамм ветчина илмеллеччě, анчах та ăна саперсем вăрласа кайнă, çавăнпа та эсир ăна илейместěр... Сире кашнинех 4-шар премěх тиветчě, анчах та вěсене лавпа çÿрекеннисем çисе янă,—терě. Çавнашкал сăмахсене час-часах илтме тивнě. Çавăн пек мăшкăлланăшăн салтаксем хытă тарăхаççě».

* * *

Гитлеровецсем нимěçсен предприятийěсенче ěçлеме хăйсем оккупациленě çěршывсенчен Германие вăйпах илсе пынă ютçěршывсенчи рабочисем выçлăх пирки тата ěç условийěсем чăтма çук йывăр пирки питě нумай пěтеççě. Урăх çěршывсенчен вăйпах илсе килнě рабочисене кунне 14—16-шар сехет ěçлеттереççě. Çав рабочисем хушшинчен станоксемпе конвейерсем патěнчех сасартăк вилнисем сахал мар пулнă. Производствăра чăлахланса юлнă тата урăх пачах та ěçлеме пултарайман рабочисем кашни кулленех темиçе çěршер çын Германирен хăйсен тăван çěршывěсене тухса каяççě. Эльба çинчи заводсенчен пěринче, Мерзебург çывăхěнчи Лейнри аммиак туса кăларакан заводсенче, Лаушри алюмини заводěнче, Нюрнбергри машинăсем тăвакан заводра тата ытти хăшпěр заводсенче февраль уйăхěнче кăна производствăра инкек-сыхлăхсем пулнă пирки 10.000 яхăн рабочи, пуринчен ытларах французсемпе итальянецсем тата испанецсем, пěтнě.

Мартăн 28-мěшěнчи ирхи пěлтерÿ

Мартăн 28-мěш ыран тенě чух çěрле фронтра нимěнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хěвеланăç фрончěн участокěсенчен пěринче кěрешекен пирěн стрелковăй часть вăйлă çапăçусем хыççăн противника халăх пурăнакан пěр пунктран хěссе кăларнă. Çапăçу хирěнче тăшманăн çěршер виллисем выртса юлнă. Пирěн боецсем пěр кун хушшинче нимěçсенне 2 оруди, 10 пулемет, 2 миномет, 45 винтовка, 2 ещěк патрон тата ытти çар пурлăхěсем тытса илнě.

* * *

Кăнтăр-Хěвеланăç фрончěн участокěсенче пěринче пирěн чаçсем, тăшмана хирěç икě кун хушши çапăçса, нимěçсен салтакěсемпе офицерěсене 500 çынна ытла пěтерсе тăкнă. Тытса илнě трофейăсем хушшинче 3 танк, 5 оруди, 10 пулемет тата 6 миномет.

* * *

Сталино облаçěн нимěçсем оккупациленě районěсенчен пěринче кěрешекен К. юлташăн партизанла отрячě хăй нимěçсене хирěç çапăçма пуçланăранпа, туллимар даннăйсем тăрăх, нимěçсен 387 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Партизансем тăшманăнне 120 винтовка, 2 миномет, 3 пулемет, темиçе автомат, гранатăсемпе минăсем, патронсем нумай тытса илнě. Противник чаçěн пěр штабне çапса аркатса, партизансем питех те кирлě оперативнăй документсем тытса илнě.

* * *

Нимěçсен 290-мěш пехотнăй дивизийěн 503-мěш полкěнчи пěрремěш батальонăн штабě çумěнчи связистсен отделенийěн командирě — тыткăна лекнě обер-эфрейтор Маттиас Клут çапла каласа панă: «Пирěн батальонăн штабě юлашки патрон юлмиччěнех тытăнса тăма хушакан приказсем тек-текех илсе тăратчě, анчах пирěн положени пачах та шанчăксăррине пурте туятчěç. Çěрле вырăссен батарейисем пеме пуçларěç, унтан пехота куçма тытăнчě. Пирěн паника пуçланчě. Пурте кам ăçта пěлнě унта тарса пěтрěç. Эпě тыткăна парăнас тесе вырăнтах юлтăм. Пирěн полк питě пысăк çухатусем тÿсрě. Пěрремěш батальонра 80 салтакран ытла мар тăрса юлчě. Салтаксен апат-çимěçě кунран-кун япăхса пырать. Тыткăна парăнсан кăна эпě нумай эрнесем хушши çименнишěн малтанхи хут тăраниччен апат çирěм». Клут Германи çарěнче 1938 çултанпа службăра тăнă, ăна иккěмěш степеньлě тимěр хěреспе наградăланă пулнă.

* * *

Нимěç салтакě (унăн хушаматне палăртма май килмен) хăйěн çемьи патне çапла çырнă: «...вырăссем пěр атака хыççăн тепěр атака тăваççě. Кану çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Эпир — жертвăсем. Пирěн ротăра 140 çынччě, халě пěтěмпе те 56 çын кăна тăрса юлчě, ыттисем вилнě е аманнă. Манăн нервсем пěтěмпех пăсăлса çитнě. Çывăрса канмалăх пирěн пěр çěр те пулман...».

* * *

Смоленск облаçěнчи Доморники ялěнчен чакса тухса кайнă чухне нимěçсем 23 çурта, мěнпур выльăх витисемпе амбарсене çунтарса янă. Хăйсен пурлăхěсене çăлса хăварма пăхакан çынсене гитлерла вăрă-хурахсем пере-пере пăрахнă. Фашистла варварсем вěлернě çынсем хушшинче: 50 çулти Анна Новикова, 61 çулти Афанасий Моисеевич Снигирев, 49 çулти Терентий Иванович Матросенко, Димитрий Иванович Шитиков, унăн 15 çулти ывăлě — Николай, 11 çулти хěрě—Надежда тата старикСем, хěрарăмсемпе ачасем нумай.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĚН УКАЗĚ

Хěрлě Çарăн начальствующи тата рядовой составне Совет Союз Геройěн званине парасси çинчен

Нимěç захватчикěсене хирěç пыракан кěрешÿ фронтěнче Командованин боевой заданийěсене кăтартуллăн пурнăçа кěртнěшěн тата çак ěçре паттăррăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене ЛЕНИН орденěпе «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА» медалě парса Совет Союз Геройěн званине парас:

1. Кěçěн политрука Хусен Борежович Андрухаева
2. Капитана Виктор Васильевич Анисимова
3. Лейтенанта Алексей Алексеевич Артамонова
4. Сержанта Иван Моисеевич Бражникова
5. Лейтенанта Алексей Андреевич Васильченкăна
6. Лейтенанта Михаил Петрович Галкина
7. Кěçěн лейтенанта Владимир Иванович Гаранина
8. Красноармееца Кочкарь Дурдиева
9. Лейтенанта Владимир Венедиктович Есауленкăна
10. Старши сержанта Василий Ефимович Капитонова
11. Капитана Афанасий Георгиевич Карманова
12. Сержанта Иван Александрович Кобылянские
13. Политрука Александр Федорович Кретова
14. Полковника Афанасий Васильевич Лапшева
15. Старши лейтенанта Анатолий Афанасьевич Морозова
16. Лейтенанта Михаил Алексеевич Навроцкие
17. Капитана Иван Ильич Руденкăна
18. Кěçěн сержанта Василий Ильич Рындина
19. Лейтенанта Анатолий Васильевич Самочкина
20. Полковника Георгий Александрович Сафонова
21. Лейтенанта Кузьма Егорович Селиверстова
22. Лейтенанта Иван Андреевич Склярова
23. Политрук заместительне Василий Ильич Утина
24. Красноармееца Иван Степанович Федорова
25. Старшинана Семен Тимофеевич Шаповаленкăна
26. Капитана Василий Иванович Шишкина.

СССР Верховный Совет Президиумěн Председателě **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумěн Секретарě **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1942 çулти мартăн 27-мěш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĚН УКАЗĚ

Хěрлě Çарăн войсковой чаçěсене наградăласси çинчен

Нимěç захватчикěсене хирěç пыракан кěрешÿ фронтěнче Командованин боевой заданийěсене кăтартуллăн пурнăçа кěртнěшěн тата çак ěçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

ЛЕНИН орденěпе

13-мěш Гвардейски стрелковăй дивизие.

ХĚРЛĚ ЯЛАВ орденěпе

15-мěш Гвардейски стрелковăй дивизие
Кавалерин 2-мěш Гвардейски дивизине
Артиллерин 300-мěш полкне
85-мěш стрелковăй полка
109-мěш стрелковăй полка
209-мěш стрелковăй полка
256-мěш стрелковăй полка
130-мěш уйрăм мото-стрелковăй батальона
Артиллерин Днепропетровски училищине.

СССР Верховный Совет Президиумěн Председателě **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумěн Секретарě **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1942 çулти мартăн 27-мěш.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эпир, орденлă Чăваш республикинчи колхозсен çěр ěçěнче малта пыракансем, выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçěн мастерěсем, Сире, пирěн хаклă учителе тата çулпуçа, большевикла хěрÿллě салам яратпăр.

Эпир хамăрăн канашлăва вăрçă пынă хаяр вăхăтра пухăнтăмăр. Çак канашлура эпир çурхи акана тата ытти ялхуçалăх ěçěсене лайăхрах та хăвăртрах туса ирттерес, выльăх-чěрлěх ěрчетессишěн лайăхрах та ăнăçлăнрах кěрешес ыйтусене сÿтсе-яватпăр.

Совет халăхě Германи фашизмне хирěç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă пирěн умма, колхозниксен умне, пысăк задачăсем лартнине эпир пěлсе тăратпăр. Вăл задачăсем, Эсир кăтартса панă тăрăх, çакăнта пулаççě: пирěн колхозниксен, арçынсемпе хěрарăмсен, хăйсен уйхирěсенче ывăнма пěлмесěр ěçлемелле, фронтпа çěршыв валли ытларах та ытларах тырпул, апат-çимěç, промышленность валли чěртавар памалла.

Çуракине ăнăçлăн ирттерни фронтра пысăк çěнтерÿ тунипе пěртанах шутланать. Çурхи акана ăнăçлăн ирттерсен, тырпул тухăçлăхě пысăк пулать, çапла вара пирěн тăван Хěрлě Çара тата пирěн хуласене ялхуçалăх продукчěсем парса тăма пысăк майсем пулаççě.

Сире, Сталин юлташ, эпир хамăрăн вăй_хăвата шеллемесěр çурхи акана хатěрленěпěр тата ăна вăрçă чухнехи пек хăвăрт, тěплěн тата пысăк пахалăхпа туса ирттерěпěр, тесе колхозла çирěп сăмах паратпăр. Эпир выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри хамăрăн çитěнÿсене малашне те ÿстерсе пыма сăмах паратпăр. Колхозсен выльăх-чěрлěхěсене йышлăлатса пырăпăр, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрăпăр.

Тырпулăн кашни пăчě, апат-çимěçěн кашни килограмě— тăшмана çěмěрмелли снаряд пулса тăраççě.

Хамăра вырлăха тата чуралăха кěртсе ÿкерме тăрăшакан гитлерла тискер кайăксене çěнтерме эпир стахановла ěçлесе пулăшăпăр.

Фронтпа тыл валли тăван çěршыва кирлě чухлех тырпул, апат-çимěç парăпăр, промышленность валли чěртавар парăпăр!

Сывă пултăр пирěн тăван çěршыв, унăн ирěклěхě тата унăн никама пăхăнманлăхě!

Сывă пултăр аслă Сталин!

Ялхуçалăхěнче малта пыракансен канашлăвě уçăлчě

Ěнер Шупашкарта ялхуçалăхěнче малта пыракансен республикăри канашлăвě уçăлчě.

Канашлăва республикăри ялхуçалăхěнче малта пыракансем, пысăк тырпулăн мастерěсем, выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри стахановецсем, трактористсемпе комбайнерсем, ялхуçалăх специалисчěсем 300 çынна яхăн пухăннă. Канашлура çавăн пекех тата Марипе Мордва АССР делегачěсем пур.

ВКП(б) Обкомěпе Чăваш АССР Совнаркомě хушнипе канашлăва ВКП(б) Обкомěн секретарě И. Чарыков юлташ уçрě. Канашлăва ертсе пыма 37 çынран ěçлě президиум суйлаççě.

Президиум членěсем хушшинче — ВКП(б) Обкомěн секретарěсем Чарыков, Пивоваров, Матвеев юлташсем, Чăваш АССР Совнаркомěн председателě Сомов, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн председателě Андреева, ЦК ВКП(б) çумěнчи Парти Контроль Комиссин Уполномоченнăйě Серов, Мари АССР делегацин председателě Каваллеров, ВКП(б) Канаш райкомěн секретарě Репкин, ВКП(б) Хěрлě Чутай райкомěн секретарě Кузьмин, Кольцовкăри Сталин ячěпе тăракан колхозран килнě делегат Ягранкин т. ыт. юлташсем те.

Канашлу пысăк хавасланăхпа тăвăллăн алă çупса хисеплě президиума ВКП(б) Центральный Комитечěн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйларě.

Кун йěркине çирěплетнě хыççăн пěрремěш ыйтупа ВКП(б) Обкомěн секретарě Пивоваров юлташ доклад туса пачě.

Доклад хыççăн прени пуçланчě. Прение 5 делегат тухса каларě.

Тăвăллăн алă çупса, канашлу Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчě.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тавçăрулăхпа паттăрлăх

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, мартăн 27-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕçсен фашистла бандисем пирĕн войскăсем йышăннă пĕр ял çине виçĕ кун хушшинче темиçе хутчен контратака тунă. Артиллеристсем тăшмана тăвăллăн персе кĕтсе илнĕ. Анчах та урса кайнă фашистсем, хăйсем пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăр, çапла ял çинелле ыткăннă.

Çав çапăçура батарея командирĕ старши лейтенант Хренов уйрăмăнах кăтартуллăн çапăçнă, хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Унăн наблюдательнăй пункчĕ вырнаçнă районра нимĕçсем пирĕн оборонăн пĕрремĕш линине татма ĕлкĕрнĕ пулнă, пирĕн чăçсене темиçе метр каялла чакма тивнĕ. Çапла вара наблюдательнăй пункт стрелковăй подразделенисенчен мала тăрса юлнă. Фашистсем ун патнех сывăхарса çитнĕ. Вĕсемпе наблюдательнăй пункт хушши 50—60 метр кăна юлнă. Çапла пулсан та, Хренов хăйĕн наблюдательнăй пунктне пăрахман. Вăл блиндажа пытанса, хăйĕн батарейине хăй çине пертерме шухăш тытнă. Полевой телефонăн трубкине илсе, Хренов çакăн пек приказ панă:

— Тăшман манăн наблюдательнăй пункта тытса илме хăтланать. Халех ман çине тĕллесе пеме хушатăп!

Батарея телефонисчĕ хытсах кайнă. Ăна командир приказĕ тĕлĕнтерсе ялтă... пек тĕлĕнтернĕ. Çав приказа пурнăçласан, командир сывă юласса шанма шитĕ те хĕн пулнă.

— Мĕскер чăрмантăр? Перĕр!—тенĕ тепĕр хут Хренов.

— Наблюдательнăй пункта тĕллесе перĕр—тесе кăшкăрса янă вара телефонист, вăл хăй мĕн калаланине хăй те лайăхах тавçăрса илеймен. Пĕтĕм тавралăха кисретсе тупă сасси илтĕнсе кайнă. Телефонист тин тăна кĕнĕ. Тăна кĕнĕ те хăвăртрах телефон трубкине ярса тытнă. Телефон тăрăх каллех вăл хăйĕн командирĕн сассине илтнĕ. Командир сывă пулман пекех лăпкă пулнă.

— Алло, алло!—тесе чĕннĕ вăл.

— Сывах иккен!—тесе савăнăçлăн кăшкăрса янă телефонист.

— Сывах, малашне те сывах пулăп,—тесе тавăрнă савăнăçлă командир.

— Ну, а халĕ ĕнтĕ тĕмсене аппаланма тытăнăр!

Снарядсем çурăлнă, блиндаж чĕтресе кăна тăнă. Пĕлĕтелле хуп-хура тусан çĕкленнĕ. Кашни минутăрах вилме пултарнине пăхмасăр, Хренов лăпкăн хăйĕн ĕçне туса пынă—вăл снарядсем тĕл ÿкнипе тĕл ÿкменнине палăртса пынă. Блиндаж тавралĕнчи юр пĕтĕмпех хуралса, тăшман юнĕпе юнланса пĕтнĕ. Пирĕн снарядсем чавнă шăтăксенче унта та кунта тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем выртнă. Виннĕ фашистсен хисепĕ ĕнтĕ çĕртен те иртнĕ. Пирĕн батарея çаплах пеме чарăнман. Снаряд хыççăн снаряд килсе тăнă. Нимĕçсем тевех чăтса тăрайман, вĕсем хăраса ÿкнĕ, аптраса кайса, хĕçпăшалĕсене те, аманнă салтакĕсене те пăраха-пăрахах, каялла тарнă.

Çав кун пирĕн артиллеристсем фашистсен пехотин виçĕ ротине çапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн танкĕсене хирĕç пересен тупăпине аркатса пăрахнă, 2 блиндажне, горючисем складне тата пулемет йăвисене çĕмĕрсе тăкнă.

А. ВИКТОРОВ.

Тăшман пысăк çухатусем тÿсет

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, мартăн 26-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Фронт участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем вăйлă контратака пуçласа ячĕç. Хаяр çапăçу тапранса кайрĕ. Тăшман ку çапăçура хăйĕн 700 салтакĕпе офицерне тата 17 танкне çухатрĕ.

[illegible]

йышăнса тăракан яла пуринчен малтан флангран çĕмĕрсе кĕнĕ те, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, вĕсенне 3 пулемет тытса илнĕ. Пулеметсене тăракан фашистсем енчелле çавăрса лартса, çавăнтах пеме пуçланă. Хăюллă паттăрсем, нимĕçсен пулеметчĕсенчен

[illegible]

Е. КОРЯВЧЕВ.

Балтика карапĕсем çĕнĕ походсене хатĕрленеççĕ

БАЛТИКАН ХĔРЛĔ ЯЛАВЛĂ ФЛОТĔНЧЕ, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС).

[illegible]

çапла чĕнсе каланă: «Хамăр вăйсемпех тата кĕске срокрах суднăсене юсар, вĕсене фашистла оккупантсене хирĕç çĕнĕрен çапăçăва тухма пур енчен те отлично хатĕрлесе çитерер»,—тенĕ. Вĕсем чĕнсе калани Хĕрлĕ Ялавлă Балтика

[illegible]

Флотăн çар совечĕ ремонт ĕçĕнчи отличниксене 10 çынна хаклă парнесем парса наградăланă. 13 çыннăн ятне карап çинчи хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Халĕ карап пайн тесен паян тинĕсе тухма хатĕр.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паха ĕçĕсем

Тата лайăхрах ĕçлеме пулатăп

[illegible]

...нĕшĕн ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 4 килограмм çу, пĕр сысна çури илме тивĕçлĕ пултăм. 1942 çулта эпĕ тата лайăхрах ĕçлеме пулатăп.

Л. БАБАЕВА.

Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозри телятница.

Кашни амаран 18 çăвăр илетпĕр

Чкаловски районри «Красное знамя» колхоз членĕсем республикăри канашлăва яма хăйсен чаплă стахановкине Екатерина Куракова юлташа суйларĕç. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвне вăл иккĕмĕш хут килет ĕнтĕ. Куракова юлташ колхозăн таварлă сысна фермине ĕçлет, сыснасене пĕлсе тата юратса пăхать, вĕсен йышне çултан çулах ÿстерсе пырать. 1940 çулта вăл вăтам шутпа кашни сысна аминчен 13-шер çăвăр, 1941 çулта 14-шар çăвăр пăхса илсе çитĕнтерчĕ. Кăçал вăл кашни сысна аминчен илнĕ çăвăрсен йышне татах та ытларах ÿстерессишĕн кĕрешет. Куракова юлташ пăхакан сысна амисем кăçал пĕр хутчен çăвăрланă та ĕнтĕ. Халĕ вăл вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерет. Сăмахран, «Чушка» ятлă амаран 14 çăвăр, «Вертушка» ятлă амаран — 15 çăвăр илнĕ. Амăшĕн сĕчĕ çитмен çурăсене урăх амасем патне янă. Çапла пăхнипе вĕсем те ытти çурăсем пекех патмар çитĕнеççĕ, икĕ уйăх хушшинчех 12—13-шер килограмм туртакан пулнă.

— Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ кăçал совет халăхĕ нимĕç пусмăрçисене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă вăхăтра пулса иртет. Пирĕн тăван çĕршыва чуралантарас шутпа сĕмсĕрленсе килсе кĕнĕ нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкма çĕршывпа фронта аш-какай ытларах та ытларах парса тăмалла. Çак задачăна пурнăçласшăн эпĕ пĕтĕм пултарулăха хурса тата вăя шеллемесĕр ĕçлеме пулатăп. Кăçалхи çул эпĕ кашни сысна аминчен 18 çăвăртан кая мар пăхса çитĕнтерме обязательство илетĕп,—тет Куракова юлташ.

Ю. КЕДРОВА.

Райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ.

Гектартан çĕр пăт илессишĕн

[illegible]

...колхозник ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркепе тĕштырă илме тивĕçлĕ пулчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем кашни ĕçкунĕ çине 5-шер килограмм ытла тырă тата 50 пус укçан илчĕç.

Пирĕн колхозниксем, уйрăмах колхозницăсем, пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ, кашни ĕçех пысăк çĕкленÿпе тăваççĕ, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешсе эпир уйсене 10 пин лав тислĕк, 120 центнер кĕл, 3 пин лав хура тăпра, 110 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 250 центнер минераллă удобрени кăлартăмăр. Агротехника мероприятийĕсене пурне те планран иртерсе пурнăçларăмăр. Вăрлăхсене икшер хут тасатса, сортласа акрăмăр. Çуракине агротехника кăтартнă пек 7 кун хушшинче туса çитертĕмĕр. Тырăсене çумкурăкĕсенчен икĕ хут тасатрăмăр. Çапла ĕçленипе вара ăнăçлă тырпул туса илтĕмĕр.

Кăçал, отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра, татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илесси пысăк ĕç пулса тăнине эпир лайăх ăнланатпăр. Пирĕн колхоз кăçал кашни гектартан вăтам шутпа çĕр пăт тырпул туса илессишĕн кĕрешет. Çак вăйлă тырпулăн никĕсĕ—çуракине ăнăçлăн ирттерни пулать. Паянхи куна эпир хамăрăн уйсене 6000 лав тислĕк кăлартăмăр, 60 центнер кĕл, 70 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 35 центнер минераллă удобрени хатĕрлесе хутăмăр. Ялхуçалăх машинисене, урапасене, хăмăт-пăявсене пурне те хатĕрлесе çитертĕмĕр. Акма кирлĕ вăрлăхсене пĕр хут сортировка витĕр, 2 хут триер витĕр кăларса сортларăмăр, шăтас пахалăхне тĕрĕслесе кондицие çитертĕмĕр.

Колхоз государствăна 1942 çулта аш-какай парас обязательствăна 85 процент тата сĕт парас енĕпе 1-мĕш кварталти плана пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕ.

Хамăрăн çывăхри «Звезда» колхоза 150 центнер сортласа тасатнă сĕлĕ вăрлăхĕ, Ленин ячĕпе тăракан колхоза 22 центнер тата «Ырлăх» колхоза 10 центнер вика парса пулăшрăмăр.

З. МИКАЕВ.

Чкаловски районри «Маяк» колхоз председателĕ.

Кăçал пĕлтĕрхинчен ытларах тырпул туса илессишĕн кĕрешетпĕр

План тăрăх иртнĕ çулта пирĕн кашни гектартан 14,5 центнер тĕштырă туса илмеллеччĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли законпа хавхаланса ĕçлесе, эпир гектартан 17,7 центнер тĕштырă туса илтĕмĕр. Уйрăм культурăсем тăрăх илсен, тырпул тухăçĕ унтан та вăйлăрах. Сăмахран, гектар пуçне ыраш 18 центнер, сĕлĕ 19 центнер тухрĕ. Çĕрулмипе техникăллă культурăсен тухăçĕ те начар мар: кашни гектартан çĕрулми плана пăхнинчен 21 центнер, кантăр вăрри 5 центнер ытларах туса илтĕмĕр.

Пирĕн колхозра икĕ бригада. Иртнĕ çулта икĕ бригади те лайăх ĕçлесе пычĕç, вăйлă тырпул туса илчĕç. Сакăншăн вĕсене ĕçшĕн хушса тÿлемелли закон тăрăх 130 центнер тĕштырă тивĕçет.

Вĕсем кăçал пĕлтĕрхинчен ытларах тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Ку тĕлĕшпе куллен мĕн туса пымаллисене пурне те пекех тунă: уя 770 лав тислĕк кăларнă, сахал мар кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Халĕ пирĕн колхозниксем фосфорит çăнăхĕ турттараççĕ. Ялхуçалăх машинисене, урапасене, сÿресене, ут таврашĕсене кирлĕ чухлех юсаса тата хатĕрлесе хунă. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортласа юрăхлă кондицие çитернĕ. Лашасем те пирĕн начар мар, çуракинче хăйсене тивĕçекен ĕçе тума пултармалла.

Иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те пысăк çитĕнÿсем турăмăр эпир. Колхозăн 4 ферма— ĕне, сурăх, сысна тата кайăк-кĕшĕк фермисем пур. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плансене пур фермăсем енĕпе те тултартăмăр. Хальхи вăхăтра ĕне, сурăх тата сысна выльăхсен хисепĕ планпа пăхнинчен ытларах.

Фермăсенче ĕçлекен колхозницăсем хăйсен ĕçне çавтери юратса тăваççĕ: выльăхсене вăхăтра апат пăраççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, вĕсен витисене тĕтĕмвах тасатса тăраççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăхчĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановление сÿтсе яврĕç. Партипе правительствăн çĕнĕ законĕ çине ответлесе, вĕсем кашни çамрăк выльăхах тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерме пулчĕç.

Колхоз кăçалхи вăрман хатĕрлевĕнче те начар мар ĕçлерĕ. Вăрман хатĕрлес тата турттарас тĕлĕшпе панă заданисене колхоз срокчченех тата ытлашшипех тултарчĕ. Ку ĕçре тăрăшса ĕçленĕ колхозниксене хаçат урлă палăртасшăн эпĕ. Вăрман касакан Демьянов, Цветков, Яковлев колхозниксем, вăрман турттаракан Зайцева, Степанова тата Яковлева колхозницăсем сивĕ çанталăка пăхмасăр, çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

Н. АНДРЕЕВ.

Советски районри «Сеятель» колхоз председателĕ, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕн делегачĕ.

Ĕнесен хисепне 50 пуçа çитеретпĕр

Пирĕн колхоз пысăках мар, анчах унăн 4 ферма. Колхозăн обществăллă выльăхĕсен хисепĕ çулран çул ÿсе пырать. Эпир уйрăмах çамрăк выльăхсене лайăх пăхса ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр. Паянхи куна пирĕн пăрулана ĕнесем ултă. Пăрусем ултăшĕ те сывă, талăкне 700-шер грамм ÿсе пыраççĕ.

Çамрăк выльăхсем ăнăçлăн ÿсни вĕсене апатлантарнинчен килет. Пăрусене эпир сĕлĕ çăнăхĕнчен кĕсел пĕçерсе çитеретпĕр. Вăл çапла пулса пырать. Сăлĕ çăнăхĕнчен шĕвĕ кĕсел пĕçеретпĕр, кашни пăрăва уйрăм нормăпа вĕсене сĕтпе хутăштарса ĕçтеретпĕр. Ку вара пăрусен кăнтăрлахи апачĕ пулать. Ирхине тата каçхине ăшă сĕт паратпăр.

Партипе правительство пире выльăхсен хисепне çулсерен ÿстерсе пыма хушаççĕ. Ăна пурнăçлассишĕн эпир тăрăшса ĕçлетпĕр. Колхоз ферминчи ĕнесен хисепне ÿстерес майпа 20 пăру контрактацилерĕмĕр. Вĕсене тата фермăри çамрăк пăрусене пурне те лайăх пăхса ÿстерсе, эпир çитес çулăн пуçламăшĕ тĕлне колхоз фермăнчи ĕнесен хисепне 50 пуçа çитеретпĕр.

М. ГОРДЕЕВА.

Комсомольски районри Пушкин ячĕпе тăракан колхоз фермин заведующийĕ.

„Коммунист" колхоз фермисенче

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕн участникĕ К. Ф. Фролов юлташ Ишлей районĕнчи «Коммунист» колхоз председателĕ пулса ĕçлет.

К. Ф. Фролов юлташ ертсе пыракан колхозăн обществăллă выльăх-чĕрлĕх фермисем 5. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе партипе правительство 1942 çул валли панă задание пур йышши выльăхсем енĕпе те пурнăçларĕ.

Колхоз фермин заведующийĕ И. Петров юлташ фермăсенчи ĕçсене лайăх организацилесе пырать. Çамрăк пăрусем талăкне 500-шер грамм ÿсе пыраççĕ, вĕсем усранакан вите таса, ăшă, çутă.

Ю. Максимова свинарка 5 сысна аминчен кăçал 46 çура илнĕ. Вĕсем пурте пурăнаççĕ, талăкра 500-шер грамм ÿсе пыраççĕ. Кăçалхи çăвăрсем январĕн 4-мĕшĕ тĕлне 750 грамм туртнă пулсан, мартăн 24-мĕшĕ тĕлне вĕсем кашни 15 килограмм çурă туртакан пулнă.

Чăх-чĕп тата хурсен фермăнчи чăхсем çăмарта тума тахçанах пуçланă. Çак кунсенче колхоз государствăна çăмарта пама хатĕрленет.

Сурăхсен фермăнче ĕçлекенсем сурăхсене сăваççĕ. Кашни кун 4-шар литр сĕт суса сыр-брынза тума хатĕрлеççĕ.

Н. КОНДАКОВ.

ÇĔНĔ КУЛЬТУРĂСЕМ АКМА ПАЛĂРТНĂ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районра чылай колхозсем кăçал çĕнĕ йышши техникăллă культурăсем акаççĕ. «Трудовик», «Красное Именево» колхозсем кăçал хăйсен уйĕсенче кок-сагыз çитĕнтерме шутлаççĕ. Тырă акакан машинăсене коксагыз вăрлăхне акма хатĕрленĕ, акмалли çĕр лаптăкĕсене уйăрнă. Çĕнĕ культурăсем акма «Ударный», «Большевик», «Çĕнтерÿ», «Совет» тата ытти колхозсем те хатĕрленеççĕ.

А. КОСОЙКИН.

Икĕ орден илнĕ утлă гвардеец Сергей Прокопьев

(Прокопьев юлташпа калаçнă тăрăх)

Сивĕ хĕл çитсе тăнă.. Малалла хирĕнекен нимĕç полкĕсене геройла Хĕрлĕ Çар вирлĕн çапа-çапа тытса чарнă. Сивĕпе ĕнтĕркенĕ нимĕç войскисем хуласем, ялсем таврашнелле пуçтарăнма васканă.

Çавăн пек сивĕ кунсенчен пĕринче нимĕçсем йышăнса тăракан Л. салине пирĕн утлă кавалеристсен чăçĕ хупăрласа илнĕ. Сехĕрленнĕ фашистсем çуртйĕр хыçĕсене лăпчăнса, кавалеристсене хирĕç тăма хăтланнă. Анчах хĕрлĕ кавалеристсем хĕссе çитернипе вĕсем хăйсем килнĕ йĕрпелех ялтан тухса тарма тытăннă. Кунта та ĕç тухман. Вĕсен çулне С. Прокопьев политрук ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ пÿлсе лартнă. Фашистсем ял хушшинчех пĕр çĕрелле пуçтарăнса тăнă.

Çак самантра кавалеристсем хушшинчи комсорг Иноземцев юлташ паттăр ĕç туса хунă. Вăл, нимĕç автоматчикĕ патне систермесĕр хăвăрт пырса çитсе, ăна çавăнтах вĕлерсе хунă. Çакăнти çапăçура Иноземцев татах тепĕр виçĕ нимĕç офицерне персе ÿкернĕ. Политрук Прокопьев ял хушшинчи нимĕçсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн хăйĕн боецĕсене пуçтарнă та вĕсене пĕр улăх тăрăх чакса пыракан фашистсен çулне татма илсе кайнă.

Улăхри ансăр çул тăрăх нумай нимĕçсем кĕпĕрленсе пынă. Унта автомашинăсем те, лавсем те пулнă, вĕсем васкасах хĕвелтухăçнелле тарнă. Прокопьев нимĕçсене тăхлан пульăсемпе çунтарнă, нумайĕшне каса-каса тăкнă. Фашистла çĕлен-калтасенчен нумайĕшĕ çак вырăнта хăйсем валли вилĕм тупнă.

...Н. ялĕ витĕр кунĕпех нимĕçсен обозĕсем иртнĕ. Кунтан инçех те мар пирĕн утлă çар чăçĕ тăнă. Нимĕçсем пирĕн кавалеристсем çине текех пулеметсенчен тата минометсенчен пенĕ.

Çакăнти нимĕçсем ăçта, мĕнле тата мĕн чухлĕ вăйпа вырнаçса тăнине пĕлме тесе Прокопьев политрук тăшмансем йышăнса тăракан вырăна çуран разведкăна кайнă. Хăйпе пĕрле вăл Ершов, Чарыков тата Левин боецсене илнĕ. Прокопьев юлташ, нимĕçсен тылĕнче кирлĕ сведенисем пухса, вĕсем çинчен хамăрăн çар штабне пĕлтернĕ.

Прокопьев панă сведенисемпе усă курса, ирхине пирĕн утлă çар чăçĕ наступлени пуçласа янă. Противник, хăйĕн чакакан войскисене тата обозĕсене хÿтĕлес шутпа, пирĕн боецсем çине авиацийпе вăйлăн тапăннă. Тăшманăн войскисем мĕнле позици йышăнса тăнине тĕплĕн пĕлме кирлĕ пулнă. Прокопьев политрук хăйпе пĕрле боецсем илсе, каллех разведкăна кайнă.

Вĕсем пĕр яла çитсе кĕнĕ. Ял варрипе юханшыв улăхĕ выртнă. Улăхăн тепĕр енче аркатнă нимĕç чăçĕн юлашки ушкăнĕсем пынă. Çав вăхăтрах Прокопьева пирĕн çуран çар подразделенийĕ тĕл пулнă. Прокопьев политрук çырма леш енчи нимĕçсене атакăлама сĕннĕ. Вĕсем вара, пехотинецсемпе пĕрле юханшыв урлă каçса, нимĕçсене хуса çитнĕ те вĕсен обозĕсен пĕр пайне тытса илнĕ.

Прокопьев штаба пĕлтернĕ сведенисем тăрăх, утлă çар чăçĕ, каллех малалла кайса, хăйĕн операцине ăнăçлăн вĕçленĕ. Çакăнти çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çарăн Командованийĕ Прокопьева Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăламалла тунă.

...Юханшывăн тепĕр енче М.. совхозăн çачĕ пулнă. Садра—виçĕ хутлă чул çурт ларнă. Çак çурта нимĕç фашисчĕсем йышăнса тăнă. Нимĕçсем вăл çуртра тĕпĕнчен пуçласа тăррине çитиччен пур енчелле те пемелли шăтăксем туса пĕтернĕ, вăл шăтăксене пулеметсем, минометсем лартса тухнă. Çапла вĕсем, çак виçĕ хутлă çурта крепость пек çирĕплетсе, ун патне никам та пырса перĕнмелле мар тума шутланă.

Улăхпа тата пысăк сад хÿттипе усă курса, çак крепость пек çурт патне старши сержант Изосимов, чăваш, хăйĕн виçĕ боецĕпе пĕрле шăппăн шуса пынă. Сивĕ çанталăкра юр кĕрчĕ тăрăх кашни метр тăрăшшĕне шуса каясси те тÿсме çук йывăр пулнă. Сад карти патне çитсен, вĕсем унта тăракан нимĕç хуралне пĕр сасăсăрах пуçтарса хунă та малалла шăвăнса кайнă. Кунта вĕсен Прокопьев çитессе кĕтмелле пулнă. Анчах та Изосимов кĕтсе выртма шутламан, нимĕçсем тăракан çурт çывăхрах пулнă пирки унăн чĕри сиксех тапма пуçланă. Вăл сасартăк çĕкленнĕ те, юлташĕсемпе пĕрле «урра»! кăшкăрса, крепость пек çурт алăкĕ патнелле чупнă. Çуртри фашистсем хусканса кайнă, вĕсем хăюллă разведчиксене хирĕç пеме пуçланă. Пирĕн хăюллă виçĕ боец, фашистсене алăкран тухма парас мар тесе, граната хыççăн граната вăркăнтарнă. Пуля лекнипе Изосимовăн сулахай алли аманнă тата унăн юлташĕсенчен те пĕри суранланнă. Изосимов кунта хăй ирттерех тăрса чупнипе пысăк йăнăш тунине тинех чухласа илнĕ. Унăн Прокопьев ушкăнĕ çитессе кĕтмеллех пулнă мĕн. Анчах халĕ ĕнтĕ нимĕн тума та çук, унăн хăйĕн пĕчĕк йышĕпех тăшмана хирĕç çапăçмалла пулнă. Çавах та вĕсем фашистсене тулалла тухма паман, алăк çинелле граната хыççăн граната персе тăнă.

Çак самантра сад енчен Прокопьев сасси илтĕнсе кайнă. Ман хыççăн малалла!—кăшкăрнă политрук.

Изосимовецсем гранатăсемпе персе тăнă вăхăтра пăрланса тăракан çыран тĕвайккинелле çичĕ боец хăпарса çитеççĕ. Вĕсем политрук Прокопьевпа пĕрле Изосимовăн боецĕсене пулăшма чупса пыраççĕ. Анчах та фашистсем ĕнтĕ бойница шăтăкĕсенчен унтан та кунтан пеме тытăнаççĕ. Çав вăхăтрах пĕр боеца амантаççĕ. Прокопьев ăна аякка леçме хушать.

— Эпĕ политрукран уйăрăлмастăп, юлташ политрук,—тет те аманнă боец, хăйĕн суранне пăхмасăрах, крепость-çурта штурмлама чупать.

Çурт патĕнче хаяр çапăçу пырать. Утлă-çичĕ герой крепость-çуртри 200 фашиста хирĕç пĕтĕм вăйĕсене хурса çапăçаççĕ. Паллах, вĕсене васкавлă пулăшу кирлĕ. Унсăрăн вĕсем боеприпассем пĕтнипе хăйсем те йăлтах пĕтме пултараççĕ.

Прокопьев боецĕсен пурнăçĕ хăрушлăхра тăнине шута илсе, боец Дрозд вĕсене пулăшма васкать. Дроздăн çапăçăва кĕме юраман. Анчах та вăл çав вăхăтрах хăй юлташĕсене пăрахма та пултарайман. Дрозд çывăхĕнче—хăйĕн помощникĕ, икĕ повар, пĕр ездовой тата утлă боец, хуçалăх тĕлĕшпе ĕçлекенсем кăна пулнă.

— Хозяйственниксем, пурте ман патă!—кăшкăрнă боец Дрозд. Пухăннă хозяйственниксем хушшинче вырăссем, чăвашсем, белоруссем, азербайджанец, осетин, таджик çыннисем пулнă. «Манăн чăн-чăн интернационаллă отряд пулса тăчĕ»—тесе шÿтленĕ кайран украинец Дрозд.

Дрозд хăйĕн боецĕсемпе пĕрле атакăна çитнĕ вăхăтра, Прокопьевецсем çурт алăкне çĕмĕрнĕ пулнă. Политрук Прокопьев боецсене çурт ăшне шала кĕрсе кайма хушнă. Боецсем пурте шалалла вăркăнса кĕнĕ. Прокопьев çуртăн аялти хутĕнчи фашистсене аркатма тытăннă, çак самантрах Дроздса хăшпĕр боецсем иккĕмĕш этажа хăпарса кайнă. Пур çĕрте те гранатăсем çурăлнă, пăшалсенчен, автоматсенчен пенĕ. Аялта та, çÿлте те сехри хăпнă фашистсем кăшкăрашни илтĕннĕ. Аялти этажсенчи нимĕçсене пĕтернĕ хыççăн, боецсем виççĕмĕш этажа хăпарнă. Кунта тарса хăпарнă нимĕç офицерĕсем аялалла персе тăнă. Прокопьевăн боецĕсем вĕсене хирĕç гранатăсемпе вăркăнтарнă.

Тата темиçе минутăран çуртăн виççĕмĕш этажне те фашистсенчен тасатнă. Çапла вара нимĕçсен крепоçĕ пулнă чул çурт—200 фашист вилли выртакан пысăк çăва шăтăкĕ пулса тăнă. М. совхозĕ вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе пысăк стратегиллĕ пункт вырăнĕнче шутланнă. Прокопьев политрукпа унăн юлташĕсен хăюллă ĕçне пула, совхоза пирĕннисем йышăнса илнĕ.

М. совхозĕ патĕнчи чаплă çĕнтерĕве тунă утлă çар гвардийĕн геройĕсене: Прокопьев, Дрозд, Изосимов юлташсене пысăк награда — Ленин орденĕ парса тунă.

Политрук Сергей Прокопьевич Прокопьев — Чăваш республики çынни. Вăл Октябрьски районри Шĕнер Хуторĕ текен ялта çуралса ÿснĕ. 1935—36 çулсенче «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ, Шупашкарти хаçат шкулĕнче вĕреннĕ. Кайран Шупашкарпа Канаш хушшинчи чугун çул строительствинче тухса тăнă «Стахановла хăвăртлăхшăн» хаçатăн секретарĕ тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Ударник» хаçатăн секретарĕ пулса ĕçленĕ. 1938 çулта кĕрсе Хĕрлĕ Çара кайнă. Вăл отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпах фронтра пулнă. Юлашки çапăçусенче С. П. Прокопьев юлташ снаряд ванчăкĕпе суранланнă. Халĕ вăл сывалса çитиччен хăйĕн тăван ялне таврăннă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ĔÇРЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕМ ПАРТИ РЕТНЕ КĔРЕÇÇĔ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче районри ĕççыннисем мĕнпур вăя, пултарулăха фронта пулăшнă çĕре пама тăрăшаççĕ. Вĕсем хушшинче халĕ ĕç фронтĕнчи çĕнĕ çынсем—двухсотниксемпе трехсотниксем уйрăмах палăраççĕ. Вĕсем, тăван Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшас тесе, вăхăта пăхмасăр, ырми-канми ĕçлеççĕ.

Çак хисеплĕ ĕçре малта пыракансем, совет влаçне чĕререн парăнса ĕçлекенсем Ленин—Сталин партине, большевиксен парти ретне кĕреççĕ.

Иван Пырков—Мыслец разъезчĕн начальникĕ. Разъезд хăйне панă плана ялан ирттерсе тултарать. Лайăх ĕçленĕшĕн ĕнтĕ разъездра ĕçлекенсенчен хăшпĕрисем кашни çулах Çулйĕр халăх комиссариатĕнчен хаклă парнесем илеççĕ. Пырков юлташа, акă, çулйĕр халăх комиссарĕ Л. М. Каганович юлташ «Отличнику сталинского призыва» значокпа наградăланă. Нумаях пулмасть ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕ Пырков юлташа ВКП(б) членне илчĕ.

Механизациленĕ вăрман пунктĕнче Иван Меркулов токарь пулса ĕçлет. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче вăл заданисене ик-виçĕ хут ирттерсе тултарса пырать. Çакă вăл уйрăмăнах васкавлă заказсем пурнăçланă çĕрте лайăх курăнать. Меркулов юлташ фронт заказĕсене хăвăртрах тăвас тесе 12—16 сехет хушши мастерскойĕнчен тухмасăр ĕçлет. Парторганизаци, Меркулов юлташ ытти ĕçне пăхса тухнă хыççăн, ăна большевикла парти ретне илчĕ.

«Большевик» заводри парторганизаци нумаях пулмасть ВКП(б) кандидатне производствăри паллă стахановеца Медяев юлташа илчĕ. Медяев юлташ заводра кĕске вăхăт хушшинчех выпарщик ĕçне вĕренсе çитнĕ. Технологи процесне лайăх вĕренсе çитнĕ май Медяев юлташ ĕç нормине ытларах тултарса ĕçлет, технологи режимне çирĕппĕн тытса пырать. Ăна халĕ смена мастерне куçарнă.

Заводăн подсобнăй хуçалăхĕн заведующине Евдокия Черновăна ВКП(б) членне илнĕ. Хальхи вăхăтра Чернова юлташ парти райкомĕнче инструктор пулса ĕçлет.

Юлашки 3—4 уйăх хушшинче ВКП(б) райкомĕ производствăра, колхозсенче т. ыт. участоксенче пример кăтартса ĕçлекен темиçе вуншар çынна парти ретне илнĕ. Анчах çапах та районра партие илес ĕç çителĕклĕ пыратъ темелле мар-ха. Уйрăм пуçламăш организацисем ĕçре малта пыракансене парти ретне илес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çапла, Сăмахран, комбинатри, Хутарти, Турханри, промкомбинат çумĕнчи пуçламăш парторганизацисем ик-виçĕ уйăх хушшинче те пĕр çынна та парти ретне илмен. Çакă вăл асăннă предприятисемпе колхозсенче партие кĕме юрăхлă çынсем çуккине пĕлтермест, пачах урăхла, партие кĕме тивĕçлĕ çынсем унта сахал мар. Анчах парторганизацисем вĕсемпе ĕçлемеççĕ, политикăллă-массăллă ĕçе куллен туса пымаççĕ.

Парти ретне ÿстерсе пырасси—парторганизацисем умĕнчи тăракан задачăсенчен пĕри. Çавăнпа ăна вăхăтралла вăхăта мар, куллен туса пыни кирлĕ.

Çамрăксен организаторĕ

Колхозсен анлă уйхирĕсенче хĕруллĕ ĕç пынă вăхăтра «XI лет Чувашии» колхоз çамрăкĕсем хăйсен сывăх юлташне, ĕçри организаторне, комсомол организацийĕн секретарьне Григорий Петрова фронта ăсатнă.

Хастарлă çамрăксем хăйсен организаторне çирĕп наказ парса янă. «Халĕ, совет халăхĕ фашистла Германин вăрăхурахла çарне хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă вăхăтра, тăван çĕршывăн чысĕпе унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешни—пысăк чыс. Тăшмана нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтер. Эпир те колхоз производствинче пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, фронта пулăшăпăр, тăван [illegible]

[illegible]

Гриша çамрăксен наказне фронтра чыслăн пурнăçланă. Боевой задανисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн темиçе хут та благодарность илнĕ. Анчах Петровăн фашистла разбойниксене тăван çĕршывран пĕр çын юлми шăлса ывăтиччен çапăçма май килмен; атакăна кĕнĕ чухне тăшман пульли ăна амантнă.

Халĕ Петров каллех колхоз счетоводĕнче ĕçлет. Фронтра пулни ăна колхозра ырми-канми ĕçлеме, çамрăксене пур ĕçе те активлăн хутшăнтарма пулăшрĕ. Вăл ертсе пынипе çамрăксем колхоза суракине тухма пур енчен те хатĕрленсе çитме пулăшаççĕ. Паянхи куна пĕтĕмпе 30 плуг, 30 сÿре, 30 сÿре турти, 28 урапа суракине тухма хатĕр. Çавăн пекех лаша хатĕрĕсем те çителĕклĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен икернелĕхĕнче пĕтĕмпе 150 центнер тырă сортланă. Кунта уйрăмăнах комсомолец Василий Егоров тата Зоя Морозова, Клавдия Толстова çамрăксем аван ĕçлерĕç.

Çав вăхăт хушшинчех Василий Зверев, Николай Вернов комсомолецсем ертсе пынипе 40 центнер кĕл пухнă.

Колхозăн суракине план тăрăх 7 кун-[illegible]

[illegible] Вăл колхоз хуралçи. Ватă пулсан та, унăн çивĕч куçĕсем колхоз пурлăхĕсене тимлĕн сыхлаççĕ. Колхоз хуралĕнче вăл пĕр улшăнмасăр 1938 çултанпа ĕçлет. Унăн икĕ ывăлĕ — Иванпа Фадей комсомолецсем фронтран хăйсен паттăр ĕçĕсем çинчен тăтăшах çырса тăраççĕ. Ку вара ватă ашшĕне колхоз пурлăхне татах та тимлĕнрех сыхлама хавхалантарать.

А. МИХАЙЛОВ.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Элĕк районĕ юлса пырать

[illegible] лесопунктри данныйсем тăрах, район пĕтĕмпе те пĕр кун—мартăн 1-мĕшĕнче ытларах ĕç вăйĕ панă; çав кун вăрман хатĕрлевĕнче çуран—289 çын, лашапа—108 çын ĕçленĕ. Çакăн хыççăн вара çынсен хисепĕ, ялан тенĕ пекех, чакса пынă. Мартăн 14-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи колхозсенчен пĕтĕмпе 295 çын ĕçленĕ пулсан, 15-мĕшĕнче—274 çын (вĕсенчен лашапа 64 çын), 16-мĕшĕнче—175 çын (вĕсенчен лашапа 48 çын) çеç ĕçленĕ. Урăхла каласан, Элĕк районĕ планпа палăртниччен ĕç вăйĕ 30—40 процентне çеç парса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ район плана тултарас енĕпе пуринчен кайра пырать, мартăн 15-мĕш тĕлне квартал планне касса хатĕрлес енĕпе—24,2 процент, турттарас енĕпе—14 процент, кирлĕ трассăсем патне турттарас тĕлĕшпе 15,5 процент кăна тултарнă.

Районра вăрман хатĕрлев планне тултарнă колхозсем çук-ха. Малта пыракан Буденный ячĕпе тăракан тата «Маяк» колхозсем те касса хатĕрлес енĕпе кăна плана 50—70 процента яхăн тултарнă, ытти енĕпе вĕсем те кайра тăраççĕ. Чăнах та, юлашки вăхăтра çав колхозсем ытларах ĕç вăйĕ пама пуçларĕç, уйрăм кунсенче плана ирттерсе тултараççĕ, анчах турттарас ĕçре çавçавах кайра пыраççĕ, паллă улшăнусем туни курăнмасть.

Элĕк районĕ вăрман хатĕрлевĕнче юлса пыни район руководителĕсенчен килет. Вĕсем ытларах калаçаççĕ, сахалтарах ĕçлеççĕ. Фактсем те куç умĕнчех. Паллă мар-и-ха ĕнтĕ вĕсемшĕн колхозсем епле ĕçлени, ĕç вăйĕ епле улшăнса тăни? Анчах çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерес тесе тăрăшни курăнмасть.

Районри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем вăрман хатĕрлес [illegible]

[illegible] са хатĕрлемелли плана мартăн 15-мĕшнех 103 процент тултарнă. Халĕ те вăл колхозран темиçе çын ĕçлет, бригадăсем кашниех пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Кунта нормăна тултармасăр ĕçлекенсем çук.

Мыслецри «Ударник» колхоз членĕсем те кăçал вăрман хатĕрлевне активлăн хутшăнчĕç. План тăрăх ку колхозран вăрманта кашни кун 6 çын ĕçлемелле, халĕ 8—10 çын ĕçлеççĕ. Ку колхоз вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе плана ытлашшипех тултарчĕ.

Мăн Улхаш ялсоветĕнчи «Красноармеец» тата «Лесной огонек» колхозсем пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухнă. Вĕсем квартал планне тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Калас пулать, колхозниксем хăйсен сăмахне тивĕçлĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, мартăн 15-мĕшне икĕ колхозĕ те плана 80 процента яхăн тултарнă («Лесной огонек» колхоз турттарас енĕпе 90,3 процент тултарнă). Вĕсем кăçал 2250 кубометр вутă хатĕрлесе, 2.000 кубометра яхăн турттарнă.

— Кăçал пирĕн колхозниксем вăрман хатĕрлевĕнче пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Пирĕн колхозран кунне 20 çын ĕçлеме каймалла пулсан, 30—40 çын каяççĕ. Вĕсем хушшинче эпир малтанхи кунсенчех ăмăртăва сарса ятăмăр, ялан ĕçлекен бригадăсем организацилерĕмĕр. Çакă вара пире ĕç тухăçлăхне уйрăмах ÿстерсе пыма пулăшрĕ,—тет «Лесной огонек» колхоз председателĕ Короткова юлташ.

Ăмăртăва сарса пынă май «Молодая сила» колхоз членĕсем те ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Сидоров юлташ бригади, акă, кашни кунах пĕр çын пуçне 4—4,35 кубометр вутă хатĕрлет. Ку бригадăна халь мехлесопунктăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата премине панă.

Х. ЛИСИН.

Тăрăшса вăрман хатĕрлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Шупуç ялсоветне кĕрекен Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем вăрман хатĕрлевĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ. М. Пахова, Е. Никифорова, А. Романова, А. Григорьев колхозниксем, ĕçе ирхине ирех тытăнса, тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ. Вăрман турттарас тĕлĕшпе хăйсене панă заданисене вĕсем кашни кун 120 — 125 процент тултараççĕ.

Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе колхоза панă плана вĕсем çак кунсенчех тултараççĕ.

М. ГАЛКИНА.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕн постановленине сÿтсе-яваççĕ

ВЫЛЬĂХСЕН ЙЫШНЕ ТАТАХ ÿСТЕРЕТПĔР

СОВЕТСКОЕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем пысăк хавхаланупа сÿтсе-яваççĕ. Çав постановлени халăх хуçалăхне малалла вăйлăн çĕклеме май паракан политикăллă паха документ пулса тăрать. Вăл пирĕн çĕршывра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле вырăнта тăма тивĕçлине тата малашне ку енĕпе мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса парать.

Постановлени хаçатсенче пичетленсе тухсанах районри колхозсенче пухусем пулса иртрĕç. Пухусенче колхозниксем постановленипе паллашрĕç, колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пулса пынине пăхса тухрĕç. Колхозниксем правительствăн постановленине ырлаççĕ, хăйсем енчен практикăллă ĕçсем палăртса хураççĕ.

Пирĕн Чăваш республики выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан союзлă тата автономиллĕ республикăсен ретне тухни колхозниксене питĕ хавасланатарать. Халĕ ĕнтĕ колхоз фермисенче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен ĕçне татах та тимлĕрех тума тытăнчĕç.

Чемеевăри «Сеятель» колхоз (фермăсен заведующийĕ А. Макаров юлташ) выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрассипе çитĕнтерессине зоотехникăпа ветеринари наукисем вĕрентнĕ пек туса пырать. Фермăсенче пур çĕрте те тасалăх, йĕркелĕх. Витесем ăшă та çутă. Апат-çимĕçе нормăпа çитереççĕ, выльăх-чĕрлĕхе чир-чĕртен лайăх упраса усраççĕ.

Колхозăн пурĕ 4 ферма ĕнтĕ. Вĕсенче пуринче те выльăхсен йышĕ планпа пăхниччен ытларах. Иртнĕ çул колхоз фермăсенчен 36.600 тенкĕ тупăш илчĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕ. Сысна ферминчи ĕçсене зоотехника хушнă пек туса пынипе тата кунта ĕçлекен В. Яковлева юлташ çак ĕçшĕн чунтан тăрăшнипе, иртнĕ çул кашни амаран 24-шар çăвăр илсе ÿстернĕ.

— Çĕнĕ постановлени тăрăх 1942 çулта пирĕн фермăсенчи выльăхсен шучĕ татах ÿсмелле, çĕнĕрен 10 ĕне, 12 пуç сысна, 7 пуç сурăх, чăх-чĕпсем 14 пуç хутшăнмалла. Пирĕн фермăсенчи выльăхсен шучĕ халех 1942 çулта пулмалли нормăран ытла. Анчах партипе правительство панă задание пурнăçласа, эпир выльăх-чĕрлĕхсен шутне татах та ÿстерме пултаратпăр,—теççĕ колхозниксем.

С. ИЛЬИН.

Çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерессишĕн

КАНАШ. Партипе правительство 1941 çулта Чăваш республикинчи колхозниксене ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе продуктивноçне ÿстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановленипе хавхаланса, районри чылай колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕç. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх фермисен шучĕ тата вĕсен ĕç пахалăхĕ нумай ÿсрĕ. Йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн, унăн продуктивноçне ÿстерессишĕн фермăсенче ĕçлекенсем социализмлă ăмăртăва тухрĕç, хăйсен ĕçне нумай хут лайăхрах туса пыма тытăнчĕç.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çулта фермăри кашни ĕнерен пĕрер пăру илсе, вĕсене пурне те лайăх пăхса ÿстернĕ. Çавăн пекех сурăхсен фермине те 38 сурăхран 40 путек илнĕ, пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Çамрăк выльăхсене пăхса ÿстерессишĕн кунта Михайловăпа Яранскова юлташсем питĕ те тăрăшса ĕçлеççĕ. Кăçал та çамрăк выльăхсене кĕтсе илме колхозăн фермисем лайăх хатĕрленчĕç. Выльăх витисене ăшăтрĕç, путексем валли çулçăллă апат, уйрăм витесем хатĕрлерĕç.

Паянхи куна фермăсенче 15 ĕне пăрулана, 20 сурăх 29 путек туса панă. Вĕсем пурте сывах, лайăх çитĕнсе пыраççĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине вуласа тухнă хыççăн, фермăсенче ĕçлекенсем хăйсен ĕçне татах та лайăхрах туса пыма тытăнчĕç. Паянхи куна Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 15 пăру, 8 сурăх путекки контрактацилерĕ. Колхозниксем хăйсен çамрăк выльăхĕсене колхоз фермине пăраççĕ.

Колхозсенчи обществăллă выльăхсен йышне ÿстерессишĕн районри ытти колхозсем те лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. Халĕ çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕç сарăлсах пырать. «Хĕрлĕ Çар» колхоз 21 пăру, 45 путек, «Иккĕмĕш Пятилетка» колхоз 12 пăру, Киров ячĕпе тăракан колхоз 8 пăру контрактацилерĕç.

Т. ТУРХАН.

КАШНИ ĔНЕРЕН 3.500 ЛИТР СĔТ

ÇĔРПУ. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ Прохоровăпа Дрягункина юлташсем Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн ферминче дояркăсем пулса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çул вĕсем пысăк çитĕнÿсем турĕç. Прохорова юлташ вăтам шутпа пĕр ĕнерен 3.160 литр, Дрягункина юлташ — 3.184 литр сĕт суса илнĕ. Вĕсем çамрăк пăрусене лайăх пăхса çитĕнтерчĕç. Вĕсем пăхакан пăрусем кашни талăкра 500-шер грамм ытла хушăнса пынă.

Стахановка-дояркăсем иртнĕ çулти çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем кăçал татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн — кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.500 литр таран сĕт суса илессишĕн тăрăшаççĕ.

Фермăна кĕрсен, кунта тасалăхпа йĕркелĕх пурри куçа тÿрех курăнать. Дояркăсем ĕнесене кашни кунах щеткăпа тасатаççĕ, эрнере пĕр хутран кая мар ăшă шывпа çăваççĕ. Лайăх пăхаççĕ, рацион тăрăх тăрантараççĕ. Çавăнпа та кунта чирпе аптăракан е выçă çÿрекен ĕнесем çук.

Дояркăсем ĕнесене талăкра 4-шар хут сăваççĕ, сăвасса кашни кунах пĕр вăхăтра сăваççĕ. Çакă вăл ĕнесене кашни сумассерен пĕр пек сĕт пама вĕрентет.

Г. ПЕТРОВ.

МТС-сенчи помполитсен ĕçĕсемпе задачисем

МТС-сенчи политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсем колхозсенчи пуçламăш организацисене суракине большевикла хатĕрленсе çитме пулăшас тĕллеве лартрĕç. Чи малтанах вĕсем организацисемпе паллашрĕç, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене шута илчĕç. Унтан кашни МТС-рах комсомолăн колхозсенчи организацийĕсен секретарĕсене пухса канашлу туса ирттерчĕç. Çав канашлура комсомол организацийĕсен суракине хатĕрленес ĕçри вырăнĕ çинчен сÿтсе-яврĕç. Кайран помполитсем чылай колхозсене кайса, организацисене вырăнта пулăшусем пачĕç. Çакă вара комсомолăн колхозсенчи организацийĕсемпе МТС-сенчи политотделсен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме пулăшрĕ.

Халь МТС-сенчи помполитсем ВЛКСМ райкомĕсемпе пĕрле комсомолăн колхозсенчи организацийĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе ярас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Элĕк МТС-ĕнчи помполит Ефимов юлташ кĕске срокрах МТС-ри тата икĕ колхозри организацисене йĕркелерĕ. Етĕрне МТС-ĕнчи помполит Токсубаева юлташ та МТС-ри организацин ĕçне чĕртсе ячĕ.

МТС-сенче политотделсем тунă хыççăн каличчен ĕçлемен организацисем те ĕçе тытăнчĕç. Асхвари (Канаш р-нĕ) пуçламăш организаци хут çинче кăна шутланса тăнă. Унăн секретарĕ Сергеев налог агенчĕ пулса ĕçленĕ. Вăл, организацие ертсе пырас вырăнне, хăйĕн комсомолецĕсенчен тарса çÿренĕ. Çавăнпа комсомол организацийĕ колхозра нимĕнле авторитетпа та усă курман.

Канаш МТС-ĕнчи помполит Большов юлташ унта комсомолецсен пухăвне ирттернĕ. Пуху Сергеев юлташа секретарьтен кăтарнă, çĕнĕ, активлă та пуçаруллă комсомолеца суйланă. Халь организаци хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетнĕ. Вăрлăх тасатса сортлас, ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухас тата юсас тĕлĕшпе ятарласа комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организациленĕ. Унти комсомолецсем халь çамрăксем валли паракан радиопередачăсене организованно итлес ĕçе йĕркеленĕ.

Комсомолăн Тушкил ялĕнчи (Тăвай р.) организацийĕн секретарĕ Новикова юлташ вăрçă пуçланнăранпа та пĕр пуху туса ирттермен, колхоз производствипе интересленмен. Çав вăхăтра колхоз хуçалăхăн чылай ыйтăвĕсемпе кая юлса пынă. Помполит Петров юлташ çитсенех комсомолецсен пухăвне ирттернĕ, Новикова юлташăн отчетне итленĕ. Пуху колхоза суракине хатĕрлеме пулăшас тĕлĕшпе тумалли мероприятисене кăтартса хăварнă. Çавăн хыççăн тин организацин ĕçĕ чĕрĕлнĕ. Комсомолецсем ялхуçалăх машинисене юсама тытăннă. Вăрлăхсене сортласа тасатас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организациленĕ. Юлашкинчен, ку ыйтусемпе колхоз кая юлассине пĕтернĕ. Кун пек примерсене МТС-сенчи помполитсен ĕçĕнчен вуншарăн илсе кăтартма пулать.

МТС-сенчи помполитсем ялхуçалăх машинисен пайĕсемпе инструменчĕсене пухас тĕлĕшпе чылай ĕçлерĕç. Туллимар даннăйĕсем тăрăх, мартăн 20-мĕш тĕлне республикăра пурĕ машинăсен 30.000 пайне пухнă. Çакă вăл, укçан шутласан, 200.000 тенкĕлĕх пулать. Унсăр пуçне комсомолецсемпе çамрăксем 60 тонна тимĕр-тăмăр, 100 килограмм тĕслĕ металл пухнă. Пухăннă пайсем хушшинче паха япаласем нумай.

Машина пайĕсене пухас ĕçе Вăрмар, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенче те начар мар йĕркеленĕ. Ку районсенчи помполитсем çак ĕçе комсомолецсене çеç мар, МТС-сенче ĕçлекенсене пурне те, уйрăмăнах механиксемпе трактористсене, явăçтарнă. Машина пайĕсене пухас тĕлĕшпе Красноармейски, Шупашкар МТС-сенче организациленĕ трактористсен бригадисем, юнашарти колхозсене кайса, ĕлĕк тракторист пулса ĕçленĕ юлташсен килĕсене кĕрсе çÿренĕ. Вĕсем машинăсене юсанă чухне кирлĕ вуншар инструментсем, тракторăн хаклă пайĕсене нумай тупнă. Красноармейски МТС-ри помполит С. Воробьев юлташ колхозсенче пухăннă машина пайĕсене вăкăрсем кÿлсе леçессине организациленĕ. Çапла майпа комсомолецсен вăйĕпе 11 вăкăра кÿлсе çÿреме хăнăхтарнă.

Машина пайĕсене пухасси пур районсенче те çакăн пек лайăх пулса пымасть-ха. Уйрăмăнах Куваскино, Йĕпреç, Тăвай районĕсем кая юлаççĕ. Ку районсенчи помполитсемпе ВЛКСМ райкомĕсем машина пайĕсене пухас ĕçе комсомолецсемпе çамрăксене кирлĕ пек явăçтарман.

Ку ĕçе начарлатмалла мар, вăйлатмалла. Тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларни вырнаçусăр. Машина пайĕсене пухни—пĕр ĕç, вĕсене юсаса ĕçре усă курни тепĕр ĕç пулать. Çавăнпа пухăннă пайсене мастерскойĕсене парса, Шупашкар, Чкаловски, Вăрмар районĕсем тĕрĕс тăваççĕ. Пур районсенче те çавăн пекех тумалла.

Суракинче вăрлăх пит пысăк вырăн йышăнса тăрать. Республика вăрлăха сортласа тасатас тĕлĕшпе юлса пынине шута илсе, ВЛКСМ Обком бюровĕн решенийĕ тăрăх, мартăн 5-мĕшпе 20-мĕш хушшинче комсомолецсемпе çамрăксен икернелĕхне туса ирттернĕ. Çав вăхăтра комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 150 пин центнер тырă сортланă. Икернелĕх уйрăмăнах Комсомольски районра организованно иртнĕ. Унта комсомолецсемпе çамрăксем 13 пин центнер тырă сортланă. Икернелĕх вăхăтĕнче Вăрнар районĕнче 10 пин центнер тырă сортланă. Республикăри чылай колхозсенче çамрăксем вăрлăха çителĕклĕ таран сортласа тасатса хунă.

Нумаях пулмасть Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсем çĕршыври трактористкăсене, хăйсен юлташĕсене, пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕнчĕç. Пирĕн республикăри трактористсем те вĕсен чĕнĕвне ырлаççĕ. Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Сĕнтĕр, Элĕк, Вăрнар, Красноармейски тата ытти районсенчи трактористсемпе трактористкăсем социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илнĕ.

Красноармейски МТС-ри У. Николаева юлташ ертсе пыракан хĕрарăмсен бригади тракторсене срокчен юсаса çитернĕ. Вĕсен ĕçне пахалăх енĕпе отлично хак панă. Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сÿтсе явнă хыççăн Николаева юлташăн бригади кăçал кашни трактор пуçне 700-шер гектар сухалама, çунтармалли япаласене 5 процент перекетлеме, бригада членĕсем кашни пĕрер хĕре тракторпа ĕçлеме вĕрентме пулчĕç.

Комсомолăн МТС-ĕнчи организацийĕсем Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне кашни тракторист патне çитерме тивĕçлĕ. Комсомолка-трактористкăсен ăмăртура малта пымалла, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе ыттисене пример кăтартмалла.

МТС-сенчи помполитсен мĕнпур ĕçĕ агитациллĕ-массăллă ĕçпе çыхăнса тăрать. Вĕсем, политотделри ытти работниксем пекех, тĕрлĕрен темăсемпе докладсемпе калаçусем ирттереççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем тĕнчери лару-тăру çинчен, отечественнăй аслă вăрçă çинчен ирттерекен калаçусемпе уйрăмăнах интересленеççĕ. Ку тĕлĕшпе Шупашкар, Красноармейски, Шăхасан районĕсенче ĕç начар мар пырать. МТС-сенчи помполитсем кашни кунах рабочисемпе служащисем хушшинче политинформацисем ирттереççĕ. Унта Совет Информаци Бюровĕн сводкисене, вăрçăри уйрăм эпизодсене вулаççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ МТС-сенчи политотделсен комсомол енĕпе ĕçлекен работникĕсен ĕçри малтанхи итогĕсем. Ку таранччен тунă ĕçсем помполитсем хăйсен умне партипе правительство кăларса тăратнă задачăсене тĕрĕс ăнланнине кăтартса параççĕ.

Умра татах та йывăртарах, ответлăрах задачăсем тăраççĕ. Суркунне сывхарса çитет. Пуçланă ĕçсене хăвăртрах вĕçлемелле. Пирĕн халĕ чылай колхозсемпе МТС-сем суракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитеймен. Çак кунсенчех машинăсене, вăрлăха йăлтах хатĕрлесе çитермелле, удобренисене турттарса килсе хумалла. Пĕр кун та усăсăр ан ирттĕр. Кашниех, уйрăмăнах çамрăксен, ырми-канми ĕçлемелле.

Комсомолецсен колхозсенче чăн-чăн организаторсем пулмалла. Вĕсем хăйсем çеç кăтартуллă ĕçлени сахал. Çавăнпа пĕрлех вĕсем хăйсем хыççăн союзра тăман çамрăксене, колхозниксен массине, колхозри тĕп вăя — хĕрарăмсене ертсе пыма пĕлмелле. Комсомолецсем ĕçрен пăрăнса тăракансене хирĕç кĕрешме тивĕçлĕ. Халь колхоз правленийĕсене звеносемпе бригадăсем организацилеме пулăшмалла. Çамрăк звеноводсемпе бригадирсене колхозниксем хушшинче ĕçе тĕрĕс организацилеме вĕрентмелле.

МТС-сенчи политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен хăйсен ĕçĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтăва та манăçа хăварма кирлĕ мар. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерессси çинчен йышăннă постановленине кашни çамрăка, кашни колхозника ăнлантарса памалла. Колхозри пăрусене, тихасене, сысна çурисене, путексене пурне те ÿстерни — комсомол организацийпе комсомолецсен чысĕ. Çамрăк выльăхсене пăхса ÿстерес ĕçре хĕрарăмсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа лайăх комсомолкăсене, хĕрачасене кĕске срокра зоотехникăпа паллаштарса, фермăсенче ĕçлеме уйăрмалла.

Ĕçри çитĕнÿ политикăллă-массăллă ĕçе мĕнле йĕркеленинчен килет. Çавăнпа помполитсем агитаторсем, чтецсем, беседчиксем хатĕрлеме тивĕçлĕ. Кашни комсомолеца чăн-чăн большевикла агитатор пулма пулăшмалла. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксене вăхăтра кăларса тăмалла. Комсомолăн колхозсенчи, МТС-сенчи организацийĕсен клубсемпе вулав çурчĕсен ĕçĕсене кирлĕ пек йĕркелемелле.

МТС-сенчи комсомол енĕпе ĕçлекен помполитсем комсомолецсене пуçаруллă пулма, пуçланă ĕçе вĕçне çитиччен тума хăнăхтармалла. Кирек мĕнле ĕçе те ушкăнпа, активпа тума çăмăлтарах. Çавăнпа кашни колхозрах, кашни МТС-рах комсомол организацийĕсем пулччăр. Комсомол йышне ÿстересси, малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илес тĕлĕшпе ĕçлесси — помполитсен обязанноçĕ.

Комсомолецсем, М. И. Калинин юлташ каланине асра тытăр. «Кăçалхи суркуннехи ĕçсем мĕн пек паха вырăн йышăнса тănине пĕтĕмĕшпех ăнланса илме тăрăшăр, юлташсем. Миллионшар çынсем, уйрăмăнах хĕрарăмсем, хутшăнса ĕçлекен суркуннехи уйхир ĕçĕсен анлă процесĕнче комсомолецсен хăйсен çамрăк хастарлăхне кăтартса памалла, вĕсен çак ĕçе хăйсен çамрăк вăй-хăватне хумалла»

Вăхăтра, пысăк пахалăхпа акса хăварсан, тырă вăйлă пулĕ. Çавăнпа, çамрăк патриотсем, пĕтĕм вăя суракине лайăх хатĕрленсе кăтартуллă ирттерес ĕçе парар.

А. ЕРЛАКОВ.

ЧАССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн политсектор начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

Хозе Диаса пытарни

ТБИЛИСИ, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Мартăн 27-мĕшĕнче Груӟи столицин ĕçтынĕсем Хозе Диаса пытарнă. Хĕрлĕ Çар çуртĕнче венoксене чечексем хушшинче выртакан тупăк умне Долорес Ибаррури, Хозе Диасăн тăлăх юлнă арăмĕпе хĕрĕ, Груӟи КП(б) Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Чарквиани юлташ, Груӟи ССР-ĕн Совнаркомĕн председателĕ Бакрадзе юлташ, Груӟи ССР-ĕн Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Стуруа юлташ тата партипе совет организацийĕсен руководителĕсем тăнă.

Темиçе пин çын тупăк хыççăн Верийски масар çине пынă. Тупăк умĕнче траурлă митинг пулса иртнĕ, ăна хула Совет Исполкомĕн председателĕ Кочламазашвили юлташ уçнă. Митингра Долорес Ибаррури хĕрÿллĕ сăмах тухса каланă.

[illegible]

Район бюджетне вăхăтра тултармалла

СЕРПУ. (Хĕмĕр корр.). Çак кунсенче пулса иртнĕ район Советĕн черетлĕ сессийĕ пулса иртрĕ. Сессире район бюджетне 1941 çулта мĕнле пурнăçлани тата 1942 çулхи çĕнĕ бюджета çирĕплетесси çинчен сÿтсе-явнă. Çак ыйтупа райфинотдел заведующийĕ Яковлевский юлташ доклад тухса панă.

[illegible] çĕр ялсоветсем иртнĕ çулти укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра пурнăçларĕç. Вĕсем маççал та ăнăçлăн ĕçлеççĕ: пĕррелĕш квартал планне ытлашшипех тултарчĕç.

Çав вăхăтрах укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кая юлса пыракан ялсоветсем те пур. Шуртавăш, Нĕрĕш, Ямаш, Елаш ялсовечĕсем 1941 çулти финанс планне 50—70 шар процент çеç тултарнă. Халĕ те вĕсем ситтелĕксĕр ĕçлеççĕ: заем, культсбор, самообложени укçисене пухас ĕçсене вĕçлемен. Уйрăм ялсовечĕсемпе учрежденисем çавăн пек юлса пынипе пула, район 1941 çулти бюджета пурнăçлаймарĕ.

Доклад тăрăх тухса калаçакан депутатсем, предприятисемпе организацисен руководителĕсем, укçа-тенкĕ пухас ĕçре халăхчен пулнă ситменлĕхсене пута илсе, малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен каларĕç.

Сессире Шăхар ялсовечĕн председателĕ Степанова, Чуракăк ялсовечĕн председателĕ Филиппова, райлесхоз директорĕ Рахалов юлташсем укçа-тенкĕ пухас ĕçри хăйсен ĕç опычĕсемпе паллаштарчĕç.

Г. ПЕТРОВ.

„Пионер Чувашии“ танк тума укçа пухаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Кунти вăтам шкулта вĕренекенсем Етĕрне хулинчи пионерсен «Пионер Чувашии» танк тумашкăн укçа пухма чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Вĕсем чĕнĕве ырласа пĕр кун хушшинче 300 тенкĕ укçа пухрĕç. З. Малинина, Е. Зубкова, Г. Дерканвин, И. Константинов вĕренекенсем 10-шар тенкĕ парчĕç.

М. СТЕПАНОВА.

КАЛИНИНО. Етĕрнери пионерсем танк тумашкăн укçа пухма чĕнсе каланине Калинино вăтам шкулĕнчи вĕренекенсем хапăл туса йышăнчĕç. Чĕнĕве сÿтсе-явнă хыççăнах кунти комсомолецсемпе пионерсем 300 тенкĕ ытла укçа пухрĕç.

К. ТИМОФЕЕВ.

ШАХАСАН. Вăтам шкулта вĕренекенсем, Етĕрне хулинчи пионерсем чĕнсе калани çине ответлесе, «Пионер Чувашии» танк тума 242 тенкĕ укçа пухса пачĕç. Шĕшкĕрти тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем те танк тума 200 тенкĕ пухнă.

А. АГИМ.

Тракторисчсем пулчĕç

СЕНТЕР. Машинно-тракторнăй станци сумĕнчи тракторисчсен курсĕнчен 32 çын вĕренсе тухрĕ. Вĕсенчен 11-шĕ хĕрсем. Хĕрсенчен чылайĕшĕсем курсран лайăх паллăсемпе вĕренсе тухрĕç. В. Алексеева, Е. Чекалова, А. Шурмакова, Е. Кудряшова юлташсем отлично вĕренчĕç. Вĕсем тракторсене юсанă çĕрте ĕçлеççĕ.

Тракторисчсен курсĕнче халĕ татах 27 çын вĕренет.

С. НАЛИМОВ.

Совет орденĕсене Англин летчикĕсене пани

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). [illegible] посолĕ Майский [illegible] çак [illegible]

Англин тăватă летчикне, СССР Верховнăй Совет Президиумĕ наградăланăскерсене, орденсем панă.

Орденсем панă çĕрте Англин авиаци министрĕ Синклер пулнă. Орденсем панă хыççăн Майский юлташ сăмах тухса каланă.

Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Консерваторсен партин центральнăй советĕн пухăвĕнче Черчилль сăмах тухса каланă. [illegible]

...ма çук нумай лайăхлантарни пирĕн шикам та пĕр самантлăха та пăхĕлеме пултараймасть. Пĕр çул каярах эпир пĕччен пулнă. Халĕ тĕнчери чи аслă виçĕ наци пирĕнпе тачăн союз туса пĕрлешрĕç, хăйсен ÿснĕçемĕн ÿсе пыракан хăвачĕпе пирĕн енче кĕрешеççĕ. Пĕр çул каярах, эпир кунта пухăнса курнăçнă вăхăтра,—тенĕ малалла Черчилль,—пире çĕнтерÿ тума çителĕклĕ май туса паракан пĕр-пĕр паллă план пурри çинчен тухса калама май пулман, пирĕн çак вăрçă эпир çĕнтернипе вĕçленессине ĕненни кăна пулнă. Халĕ ĕнтĕ ак çапла пулассии пит те ĕненмелле япала пек туйăнать: эпир тата пирĕн союзниксем çак халь пыракан вăрçăра хамăрăн пĕрле çыхăннă вăйсемпе, пĕтĕмĕшпех мобилизацилес тата организацилес пулсан противникăн нитчен ытларах пулса тăракансекерсемпе, хамăр айăппа кăна усă курма пултараймасан, çавăн пекех тата вăхăт иртсе пынă майăн пирĕн алла кĕрсе пыракан тата йышлăланса пыракан шанчăксемпе усă курма пултараймасан кăна парăнма тата пурнăçра чи халăхне çухатма пултарăпăр. Çавăнпа та пирĕн хамăра хамăр мĕнле тыткаланине, пирĕн вăрçă тĕлĕшпе кирек те мĕнле формăпа та, кирек те мĕнле тĕллевпе те туса пыракан ĕçсене темиçе хут та тишкĕрсе пăхас пулать. Пирĕн хамăрăн çĕршывăн çыннисемпе пирĕн союзниксем эпир хамăр пулăшма пултарнă таранах пулăшнине ĕненсе тăччăр тесе, пирĕн мĕн кирлине пурне те тумалла».

Черчилль малалла çапла каланă: правительствăна анлăн критикăлани тата канашсем пани, паллах ĕнтĕ, ăна пулăшать, анчах пирĕн армие, халĕ вăйлă та çирĕп пулса тăраканскере, пăшăрхантарма, унăн çĕршыв умĕнчи шанчăкне хавшатма никама та ирĕк пама юрамасть.

Хальхи вăрçă, тĕнчери вăрçă пулса тăраканскер тата «тинĕссене, типĕ çĕрпе сывлăша çапăçăвăн пĕрлĕхлĕ хирĕç туса хунăскер», заводсене фронтăн малти линийĕ туса хунăскер, кăларса тăратакан йывăрлăхсене кăтартса пырса, Черчилль хăрушлăхсене хирĕç кĕрешес ĕçре наци пĕрлĕхлĕ пулма тата чăтăмлă та çирĕп пулма чĕннĕ.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче Совет Союзĕпе интересленеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи халăхăн пур сийĕсенче те Совет Союзĕпе, унăн культурипе тата унăн Хĕрлĕ Çарĕпе пит интересленни палăрать. Америкăри радио Совет Союзĕ çинчен тата Хĕрлĕ Çарăн çапăçăвĕсем çинчен çырнă статьясене час-часах вуласа парать. Нью-Йорк муниципалитечĕн радиостанцийĕ «пирĕн союзниксем» тесе ят парса, Совет Союзĕпе паллаштармалли програмăсен серине парать. Март уйăхĕн варринче пĕтĕм çĕршывĕпе Зоя Космодемьянскаян ĕмĕр манми ĕçĕ çинчен радиопередача панă.

Пысăк хуласенче пуринче те совет фильмĕсене кăтартаççĕ. Голливудра «Боевые подруги» ятлă кинофильмăн Америкăри вариантне хатĕрлеççĕ. Совет фильмĕсене киносенче кăтартма паракан организаци юлашки вăхăтра кино-театрсем совет фильмĕсене ытларах ыйтма тытăнни çинчен пĕлтерет. Хĕрлĕ Çар çинчен тата совет хĕрарăмĕ çинчен калакан документлă фильмсемпе уйрăмах интересленеççĕ.

Çынсем Хĕрлĕ Çарпа Совет Союзĕ çинчен çырнă статьясемпе кĕнекесене, уйрăмах США-н ССР Союзĕнчи посолĕ пулнă Дэвисăн кĕнекине ыйтаççĕ. Ситес кунсенче çав кĕнеке Канадăра француз чĕлхипе тата Мексикăра испанец чĕлхипе пичетленсе тухать. «Совьет Раша тудей» («Паянхи Совет Российи») ятлă журналăн тиражĕ нумай ÿснĕ. Анна Луиз Стронгăн «Советсем тата вĕсенчен мĕне кĕтеççĕ» ятлă кĕнеки 35.000 экземпляр саланнă. Кентерберийски собор настоятелĕн «Совет влаçĕ» ятлă кĕнеки 1.300.000 экземпляр саланнă. Юлашки çулталăк хушшинче халăха сутта кăларас, ачасене пăхса вĕрентсе çитĕнтерес т. ыт. ыйтусемпе çырнă кĕнекесем США-ра 300.000 экземпляр саланнă. Пысăк совет атласĕн пĕррремĕш томне йăлтах сутса пĕтернĕ.

Ситес вăхăтра Лондонри «Таймс» хаçатăн корреспонденчĕн Уэртсăн «Мускаври вăрçă дневникĕ» ятлă кĕнеки тата Дэвиспа Стейтер корреспондентсен «Совет Азийĕ» тата «Демократи оборонин пĕррремĕш линийĕ» ятлă кĕнекисем пичетленсе тухаççĕ. США-ра юлашки вăхăтра темиçе совет кĕнекине, çав шутра Тарлен «Наполеон Россия çине 1812-мĕш çулта тапăнни» ятлă кĕнекине тата Ильинăн «Çын мĕнле майпа улăп пулса тăнă» ятлă кĕнекине куçарса пичетлесе кăларнă. Шолоховăн «Лăпкă Дон» ятлă романне пит ыйтаççĕ. Икĕ издательство Толстойăн «Вăрçăпа мир» ятлă романне тепĕр хут пичетлесе кăларма тытăннă.

Гитлеризм чир-чĕр тата выçлăх кÿрет

АНКАРА, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). «Улус» хаçатра Турдин журналисчĕ Эсмер гитлеровецсем тытса илнĕ çĕршывсенче продовольстви енчен пурнăç калама çук йывăрланса çитни çинчен çырать. Çав статьяра çапла çырнă: Францире продовольстви лартăвĕ пит çивĕч тăрать. Унта çын пуçне çĕршер грамм çăкăр параççĕ. Рабочисене 200-шер грамм памалла тесе йышăннă постановленине час-часах пурнăçа кĕртмеççĕ. Статистика даннăйĕсем тăрăх çакă курăнать: Францире вилекенсен хисепĕ 40 процента çити хăпарнă. Копенгагенра ĕлĕк кунне 3.000 сысна, 2.500 пуç шултра выльăх пусни пулсан, халĕ унта кунне пурĕ те 3 сысна, 8 пуç шултра выльăх кăна пусаççĕ. Норвегире—ĕлĕк услам çу ытлашшипех пулнă çĕршывра — халĕ услам çу мар, маргарин та тупма çук. Çăкăра çăнăх çине целлюлоза хушса пĕçереççĕ, çавăнпа та вар чирĕпе чирленĕ çынсен хисепĕ ÿснĕçемĕн ÿсе пырать. Пурнинчен те йывăрри вăл вара Грецире. Кунта ĕнтĕ калаççăн та йывăрлăхсем çинчен мар, выçлăх çинчен калаçмалла.

Бельгире чуралла ĕçлеттерни

СТОКГОЛЬМ, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). «Стокгольмс тидининген» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: оккупациллĕ влаçсем Бельгире нимĕнле йĕркене пăхăнтарман ĕç повинноçĕ туса янă, чуралăх саманине каялла таварнă. Кашни гражданине, влаçсен пуçне мĕн килсе кĕрет, çав ĕçе ĕçлеттерме пултараççĕ. Предприятисенче арçынсем вырăнне хĕрарăмсен е инвалидсен ĕçлемелле пулать. Çав предприятисенчи квалификациллĕ арçын рабочисене çар заводĕсене куçараççĕ. Рабочисем çĕнĕ ĕçе куçмашкăн килĕшмесен, вĕсене унта ирĕксĕр илсе каяççĕ. Çак правилăсене кам пăхăнмасть, вĕсене хытă айăплаламалла пулать.

Англи авиацийĕ Кельн çине вĕçсе пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви Англи авиацийĕ мартăн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Кельн çине вĕçсе пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерекен хыпарсене пичетлесе кăларнă. Кун çутипе ÿкерсе илнĕ фото-ÿкерчĕксем çав вăйлă та хаяр тапăнура вĕсем сиенсем тупнине лайăх кăтартса параҫҫĕ.

Хулан çурçĕрти чи промышленноçлă пайĕнче питех те пысăк калибрлă бомба чугунçул депонĕ çине тĕлех пырса ÿкнине палăртнă, унта темиçе вагон рельсăсем çинчен аяккалла сирпĕнсе кайнă. Деповăн кăнтăр пайĕнче тугунçулсен темиçе мастерскойĕ пушара пула кимĕн юлмиччен çунса кайнă, ытти мастерскойсем фугаснăй бомбăсем çурăла-çурăла кайнипе нумай сиенленнĕ. Мастерскойсенчен хĕвелтухăçнерех йывăр бомба çурăлса кайнипе 6 пин квадратлă ярд йышăнса тăракан территори çинчи çуртсем тĕппипех ишĕлсе аннă. Шинăсем, резина трубасем тата ытти çар хатĕрĕсем тăвакан «Франц Клодт» компанийĕн резина заводĕ питех те хытă ишĕлнĕ. Ку завод территорийĕ пĕтĕмпе 168 пин квадратлă ярд çĕр лаптăкĕ йышăнса выртать. Завода çурррине ытла аркатса çĕрпе танлаштарнă. Темиçе склад помещенийĕсем пушарпа пĕтнĕ, ыттисем чылаях çĕмĕрĕлнĕ.

Çак пунктран çурçĕрелле халăх пурăнакан района пысăк сиен кÿнĕ. Главнăй вокзалтан кăнтăр-хĕвеланăççелле ларакан çуртсен кварталĕсем çине бомбăсем тĕлех пырса ÿкнине палăртнă. Хула соборĕнчен пĕр пин ярд хĕвеланăççелле пысăк калибрлă бомба ÿксе 16 пин квадратлă ярд йышăнса выртакан квартала пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă. Хулари главнăй скверта кăнтăралла пĕр квартала пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартнă, кунта кварталл вырăнне фото-ÿкерчĕк çинче бомба çурăлса кайнипе пулнă пысăк хура шăтăк кăна палăрса тăрать.

Англи авиацийĕ Рур облаçĕ çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: мартăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем каллех Рур облаçĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбардировщиксем унти промышленность объекчĕсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă.

Кунсăр пуçне Англин бомбардировщикĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, противникăн Голландири аэродромĕсене, Гент сывăхĕнчи нефть тасатакан завода тата Гаврти доксене атакăланă. Тапăнусенчен пĕринче Англин истребителĕсем сывлăшри çапăçура противникăн пĕр бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă.

Çак мĕнпур операцисенче пулнă самолетсенчен 13 бомбардировщик каялла таврăнман. Иртнĕ çĕрле Англи территорийĕ çинче противникăн пĕр бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă.

Парижра сывлăшран пырса тапăннă пирки тревога пулнă

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширеп çапла пĕлтерет: мартăн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Парижра сывлăшран пырса тапăннă пирки тревога пулнă. Тревога пĕр сехет çурă пынă. Англи самолечĕсем хула çине листовкăсем пăрахнă. Листовкăсенче çакна асăрхаттарса çырнă: Англи авиацийĕ Германи валли ĕçлекен Франци предприятийĕсем çине бомбăсем пăрахма вĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкиччен те чарăнса тăмĕ, тенĕ.

Партизансем Павелич бандисене хирĕç Сараево сывăхĕнче çапăçни

ЖЕНЕВА, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 27-мĕшĕнче Сараево районĕнче Югослави партизанĕсемпе Павелич отрячĕсем хушшинче вăйлă тытăçусем пулса иртнĕ. Çак тытăçусем пулнă вырăнта ларакан яла влаçсем панă распоряжени тăрăх вут тивертсе тĕппипех çунтарса янă. Влаçсем халăха пĕлтерме приказ пичетлесе кăларнă. Приказра Сараево округĕнчи халăха çапла асăрхаттарса çырнă: округра пулакан кирек хăш диверсишĕн те диверси тунă тĕлтен инçе мар ларакан халăх пурăнакан пунктсене çунтарса яма хушнă, тенĕ.

Франци танкерĕ Германин подводнăй лодкисем валли горючи тăратать

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Мексикăран хыпар панă тăрăх, официальнăй йĕркепе çакăн çинчен пĕлтернĕ: Мексикăн тинĕс министерстви панă распоряжени тăрăх Тампико бухтине Франци танкерне конвойпа илсе кĕртнĕ. Унăн сăлтавĕ çапла: çав судно тĕнĕл держависен подводнăй лодкисене горючи парса тăнă, ун çинчен нумаях пулмасть кунти хаçатсем те çырнăччĕ.

Мексика çыранĕсене хÿтĕлесе тăракан çар суднисем ку танкера Вера-Круц сывăхĕнче вăл шанчăксăр ĕçсем тума хăтланнă вăхăтра асăрханă та ăна конвойпа илсе кайнă.

Бразилире нимĕçсен шпионла центрне аркатса тăкнă

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Рио-де-Жанейро хулинчен çапла пĕлтерет: Сао Пауло штатĕнчи полици тĕнĕл держависен шпионла организацине тупса аркатса тăкнă. Ку организацин центрĕ çав Сао Пауло штатĕнче пулнă. Нумай нимĕçсене арестленĕ, çавăн пекех тата Бразили фашисчĕсене, «зеленорубашечниксем» текенскерсене, чылаях арестленĕ. Полици пĕлтернĕ тăрăх, çав организаци Кăнтăр Америкăри шпионла чи пысăк организацисенчен пĕри пулнă.

Америка флочĕ Лăпкă океанăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче тунă ĕçсем

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс министерстви коммюнике пичетлесе кăларнă. Çав коммюникере Америка флочĕпе авиацийĕ февраль уйăхĕн вĕçĕнче тата март уйăхĕн пуçламăшĕнче японецсем оккупациленĕ Уэйк тата Маркус утравĕсене хирĕç тунă ĕçсем çинчен каланă. Çав утравсем Гавай утравĕсемпе Япони çыранĕсем хушшинче лараççĕ. Маркус утрав Иокогамăран 990 мильăра ларать.

Коммюникере çапла каланă: бомбăсем пăрахса тата карапсем çинчи артиллерирен персе, çав утравсен çыран хĕрринчи сооруженийĕсене тата утравсем çинчи аэродромсене пысăк сиен кÿнĕ. Уэйк утравĕ патĕнче 2 патруль суднине тата тинĕс çинчи 2 пысăк самолета путарнă. Портсенче тата аэродромсем çинче ишĕлнисем пур. Çавăн пекех тата водохранилищĕсене çĕмĕрнĕ.

Америка авиацийĕн икĕ самолечĕ çеç пĕтнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Нью-Йоркран пĕлтернĕ тăрăх, США-н тинĕс министерствин представителĕ, сывлăшрипе тинĕсри вăйсем Уэйкпа Маркус утравĕсене хирĕç тунă ĕçсем çинчен каласа, вĕсене «Японин килхушшинчи вăрçи» тесе ят панă. Çак ĕçсем, тенĕ вăл, «Пирĕн флот ăçта тата вăл мĕн тăвать» текен ыйту çине панă ответ пулса тăрĕç. Гонолулури тинĕс базинчен Маркус утравне çитме 5.300 миля шутланать, çакна пула та ĕнтĕ çав ĕçсем çинчен кая юларах пĕлтернĕ. Паллах ĕнтĕ, японецсем Уэйк утравне оккупациленĕренпе унта нефть, çĕркăмрăкĕ тата ытти тĕрлĕ çар материалĕсем те чылай нумай илсе пынă. Маркус утрав Япони флотне топливо парса тăракан база пулса тăрать.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче уйрăм компани аллинчи чугунçула реквизициленĕ

ВАШИНГТОН, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Мартăн 21-мĕшĕнче Рузвельт приказ панă. Çав приказра «Толедо Пеориа Уэстерн Рэйлрод» ятлă компани аллинче тăракан чугунçула реквизицилеме хушнă. Сăлтавĕ çакă: çав чугунçул çинчи пысăк квалификациллĕ рабочисен пĕр ушкăнĕ забастовка тунă. Правительство чугунçул хуçи пулса тăракан компанипе рабочисене вĕсен хушшинчи тавлашăва хăй татса пама 6 хутчен сĕннĕ. Рабочисен представителĕсем правительство сĕнĕвне кашнинчех йышăннă, компани 6 хутчен отказ парса пынă. Рузвельт хăй приказĕнче компанипе рабочисем хушшинчи конфликта тăсса пынăшăн айăплать. Рузвельт правительство лартнă çар япалисене турттарас ыйтăва йĕркелесе тăракан комитета çав чугунçула тытса тăрас ĕçе хăй аллине илме хушнă. Приказра каланă тăрăх, «вăрçа ăнăçлăн ирттерсе яма» кирлĕ вăхăт иртиччен çав чугунçул правительство комитечĕн аллинче тăмалла.

«Толедо Пеориа Уэстерн Рэйлрод» компанин чугунçулĕ Иллинойс штачĕн варрипе иртсе каять.

Китай войскисен ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Чунцинри корреспонденчĕ Китай командованийĕн представителĕ тунă заявлени çинчен пĕлтерет. Çав заявленире çапла каланă: Китай войскисен питĕ вăйлă икĕ колонни Бирма енчен пырса икĕ тĕлте Тан чикки урлă каçнă. Китай войскисем Тангоу тата Хейгхонг еннелле куçса пыраççĕ.

Хальхи вăхăтра Бирмăра Тоунгу таврашĕнче питĕ вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Унта Китай войскисем японецсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Японецсем флангсенче малалла иртсе кайнă пулсан та, Китай войскисем хăйсен позицийĕсене çаплах хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Тоунгура ĕç йывăр тăрать, анчах та çавтери хăрушах мар. Китай командованийĕн представителĕ каланă тăрăх, японецсен виçĕ дивизийĕ Мандалейăн патнелле Промерен пыракан çул тăрăх куçса пыраççĕ. Японецсен çав войскисемпе пĕрле 150 самолет вĕçсе пырать.

Рейтер агентстви каланă тăрăх, Лондонри авторитетлă ушкăнсенче çакна кăтартса параççĕ: Китай войскисем Тоунгуна хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ-ха. Китай войскисен халь пикĕрен пĕрне суйласа илмелле пулать ĕнтĕ: е вĕсен çавăрса илнĕ японецсен войскисене хирĕç питĕ хаярран çапăçса çав унка татса тухмалла, е резервсем пырса çитиччен, çав резервсем японецсене çурçĕр енчен пырса çапиччен тытăнса тămалла.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Чунцинри корреспонденчĕ, Бирмăран радио тăрăх калани çине кăтартса, çапла пĕлтерет: японецсем союзниксен оборонин тулашĕнчи линийĕсем витĕр сăрхăнса кĕреймен пирки китаецсен Тоунгури войскисен флангне тылран пырса атакăланă.

Суту-илÿ парохочĕ Германин подводнăй лодкине путарнă

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тинĕс министерствин представителĕсем çапла каласа панă: халĕ тĕплĕн паллă пулнă тăрăх, çак çул пуçламăшĕнчех Караиб тинĕсĕнче Германин подводнăй лодки Америкăн суту-илÿ парохочĕ çине торпедăсем тĕллесе янă, анчах та торпедăсем парохода тивеймесĕрех пароход çумĕпе иртсе кайнă. Америка парохочĕ подводнăй лодкăна çавăнтах хăйĕн корпусĕпе пырса çапнă та шыва путарнă.

—o—

Ютçĕршывсенче

● Нимĕçсен салтакне вĕлернĕ тесе, гитлеровецсем Голландире икĕ рабочие асаплантарса вĕлернĕ тата иккĕшне нумай вăхăт хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă.

● Нимĕçсем Норвегире паллă норвежецсене тытса нумайĕшне валошник шучĕпе тĕрмене хупса лартнă. Вĕсем хушшинче парламент членĕсем, юристсем, муниципалитетсен чиновникĕсем, банкирсем пур.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРУБОЧИСТНОМУ БЮРО

Чебоксарского добровольно-пожарного общества ТРЕБУЮТСЯ ТРУБОЧИСТЫ

Могут быть приняты и женщины. Работа сдельная.

Для знакомства с печным делом будут организованы курсы.

За справками обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Красная площадь, дом № 33 против артели „Красный молот“.

СКЛАД МЕТАЛЛОМА
Главторгчермета
по Чувашской АССР

Принимает лом железа и чугуна от организаций и частных лиц.

Адрес склада: гор. Чебоксары, правый берег Волги, возле нефтебазы.

Телефон 1—04.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ

ИНЖЕНЕРЫ И ТЕХНИКИ, КОНСТРУКТОРЫ ПО ХОЛОДНОЙ ОБРАБОТКЕ МЕТАЛЛА, ЭКОНОМИСТЫ-ПЛАНОВИКИ, НОРМИРОВЩИКИ, СТЕКЛОГРАФИСТ, ИНЖЕНЕР-ЭЛЕКТРИК-МОНТАЖНИК, БУХГАЛТЕРА, СЧЕТНЫЕ, СНАБЖЕНЧЕСКИЕ И СКЛАДСКИЕ РАБОТНИКИ;

РАБОЧИЕ СЛЕДУЮЩИХ СПЕЦИАЛЬНОСТЕЙ:

токаря, слесаря, жестянники, модельщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, каменщики, печник, кочегары, фрезеровщики, сверловщики, литейщики, сварщики, гальваники, слаботочники, радист, плотники, шорники, дворники, истопники, строгальщики, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по авто, наборщик типографии, электромонтеры, ящечники-упаковщики, столяры, возчики, уборщицы, подсобные рабочие;

ПОЖАРНЫЕ РАБОТНИКИ;

ВАХТЕРЫ-ОХРАННИКИ (мужчины и женщины). Зарплата до 300 руб.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.

ПРИНИМАЮТСЯ

ПЕРЕКВАЛИФИКАНТЫ (взрослые ученики от 16 лет).

За время обучения от 1 до 3-х месяцев получают от 150 руб.

За справками обращаться от 8 до 14 часов по адресу: ул. Ленинградская, 38, отдел кадров.

5—3

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—57, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 432 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 269. Ф. 6, 58 64 [illegible]